...мсш çул тухать. Хакё 10 пус.

1941
ФЕВРАЛЬ
19
ЮНКУН
41 (5756) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пётём тёнчери пролетарисем, пёрлешёр!

ВКП(б) ОБКОМЁПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧЁН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧЁН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧЁН ХАÇАЧЁ.

ВКП(б) Пётём Союзри XVIII конференцийё

ПАРТОРГАНИЗАЦИСЕНЕ ПРОМЫШЛЕННОÇПА ТРАНСПОРТ ЕННЕЛЛЕ ÇАВĂРМАЛЛА

Большевикла партин Пётём Союзри XVIII конференцийё хăйён ёçне çёршыври политикăллă тата производствăллă пысăк çёклену обстановкинче пуçларё. Хаçатсен ёнерхи номерёсенче Г. М. Маленков юлташ «Парти организацисен промышленность тата транспорт тёлёшёнчи задачисем çинчен» тунă доклад пичетленсе тухрё. Паян конференци пирён аслă тăван çёршывăн экономикăллă тата обороннăллă хăватне малалла çирёплетсе пымалли тёп çулёре палăртса параканă доклада сýтсе-явма тытăнать.

Социализмлă промышленноçпа транспортăн çитёнёвёсем пуринпён те паллă. Промышленность продукцийё тата грузооборот çулран çулах калама çук вăйлăн ýссе пырать. Ленин—Сталин партийё СССР халăх хуçалăхён никама пăхăнса тăмалла мар положенине туса хучё, пирён тăван çёршыва хăватлă индустриллё социализмлă держава туса хучё. Пирён çёршывра çёнёрен капитализм туса хумалли пётём клапансене хупса лартнă. Социализмăн çак çёнтерёвёсем историллё выран йышăнса тăраççё.

Промышленноçпа транспортăн çитёнёвёсем пирён партине тата пётём совет халăхне савăнтараççё, анчах çав çитёнýсем халё пётерсе çитереймен пысăк çитменлёхсене большевиксенчен хупăрласа тăмаççё. «Эпир хамăр çитменлёхсене мён чухлё тýррён ýçса парăпăр,—тет Маленков юлташ,—вёсене çавăн чухлё хăвăртрах пётерёпёр. Çавăн пек тума пире Сталин юлташ куллен-кун вёрентет».

Чылай отраслёсем производство планёсене тултарса пыманни, кая юлса пыракан предприятисемпе чугунçулсем çинче йёркелёх туса хума чи кирлё услови вăл — тасалăхпа йёркелёх. Аçта пылчăк,—çавăнта брак, аçта тасалăхпа йёркелёх çук, — çавăнта аварисем. «Совет завочё тасалăхпа йёркелёх тёлёшёнчен пример кăтартаканни пулмалла» (Маленков).

Производство культурине хăпартни вăл — продукци туса кăларас ёçре ритмичность туса хунине, график тăрăх ёçленине, штурмовщинăна пётермен, технологи дисциплинине пăхăнса ёçленине, çёнё техникăна ёçе кёртсе пынине, çёнё машинăсем, материалсем тата изделисем туса кăларма вёренсе пынине пёлтерет. Хаклăран та хаклă изобретенисемпе лайăхлатусене çулталăкё-çулталăкёпех производствăна кёртмесёр выртаннине, новаторсен малта пыракан çёнё меточёсене хакламаннине, йышăнманнине чăтса тăма çук. Анланма вăхăт ёнтё, техника ыйтăвёсенчи рутинăпа консерватизм предприятисене кая тăратса хăвараççё, çёршывăн оборонăллă хăватне сиен ýтереççё. Парти предприятисен руководителёсен пёр пайё çёнё техника çине хýрере çапкаланса пыракан çын куçёпе, тёпренех оппортунистла пăхнине пётерме хушать.

Пирён пётём хуçалăх ёçён пахалăхне хăпартма тăрăшмалла. Предприятин пётём ёçён пахалăхне кăтартса пыракан тёп показатель вăл—продукцин хăйне ларакан хакё пулса тăрать. Продукцин хăйне ларакан хакёнче хуçалăхлă-техникăллă руководство меточёсем те, оборудованине мён таран усă курни те, производствăри культура виçи те, куçкёски çинчи пекех, курăнса тăрать. Продукцин хăйне ларакан хакне чакармалли çăлкуçсем вёсем — хуçалăха пёлсе, большевикла тытса пынинче, хозрасчетра, перекетлёх режимёнче, ёç тухăçлăхне хăпартса пынинче. Ёç тухăçлăхне малалла ýстерсе пырас ёçре паха рычаг пулса тăракан ёçукçине усă курса, ёç результатёсемшён кашни ёççынни материально интересленмелле туса хумалла, социализм чухне ёçукçин ертсе пыракан принципё — ёçён хисепёпе пахалăхне кура тýлемелли принцип пулса тăрать.

Промышленноçпа транспорт юлашки уйăхсенче тунă çитёнýсенче СССР Верховный Совечён Президиумё июнён 26-мёшёнче кăларнă Указ питех те пысăк выран йышăнса тăчё. Указ пётёмёшпех пурнăçа кёртесситён кёрешесси халё те парторганизацисен пысăк та кирлё задачисенчен пёри пулса тăрать. Ёçри тимёр пек çирёп дисциплина социализм строительствин никёсёсен никёсё пулса тăнине асра тытса, прогулсене пётёмпех пётерес пулать. Çирёп дисциплина, çирёп единоначали, решенисене пурнăçа кёртессине хăпартни — промышленноçпа транспорта ăнăçлăн малалла илсе пыма çаксем кирлё ёнтё пире.

Сталин юлташ çапла вёрентет: политикăллă тёрёс линие кăтартса пынă хыççăн, ёçе ăнăçлăн тăвасси организацилле ёçсенчен, парти линине, парти решенийёсене пурнăçа кёртессишён кёрешес ёçе организацилеминчен, çынсене тёрёс суйласа илнинчен, ёçе мёнле тунине тёрёслесе пыннинчен килет. Кадрсене тёрёс вырнаçтарса тухас тесен, çынсене сăнаса вёренес тата лайăх пёлес пулать, пултарулла, пуçарулла работниксене, партире тăраканнисене кăна мар, партире тăманнисене те, пысăкрах ёçе хăюллăнрах уйăрса лартас пулать. Маленков юлташ работниксене хут тăрăх, канцеляристла сăнаса вёренессине пётерме, кадрсене суйласа илес ёç çине биологилле пăхассине пётерме чёнчё. Çынна унăн йăх-тёпё мар, унăн большевикла ёçёсем, пултарулăхёсем, таланчёсем илемлетсе тăраççё. Работникăн политикăллă тата ёçлё пахалăхёсем — çаксем пулаççё ёнтё ăна ёçе лартнă чух тата пысăкрах ёçе куçарнă чух хакламалли критерисем. Пултарулла çынсене пысăкрах ёçе куçарса лартса, юрăхсăр, вăйсăр, хăюсăр работниксене вăхăтра улăштарса пырас пулать. Маленков юлташ чёрё ёçе организацилеме пултарайман сýпёлтенчен тата хăйсене хăйсем мăнкăмăлланса шанса тăракан, «хăйсен культурăсăрлăх никёсёç çинче тёреклён ларакан» тăмсайсенчен хаярăн тăрăхласа кулчё, çавăн пек сýпёлтисемпе тăмсайсен пёлýлёхсем çур пуслăх та çук, мăнкăмăлланасси вара ытлашшипех пур. «Çавăн пек тăмсайсене тăрă шыв çине кăларас пулать тата руководство ёçёнчен хăвалас кăларас пулать, юлташсем», — терё Маленков юлташ.

Конференцире сýтсе-явма организацилле ёç енёпе паха та кирлё чылай сёнýсем тăратнă. Промышленноçпа транспорт наркоматёсене тата предприятийёсене пулăшас ёçе вăйлатас шутпа, промышленность ытларах аталаннă хуласенче, облаççенче, крайсенче тата республикăсенче парти горкомёсемпе обкомёсен промышленность енёпе ёçлекен секретарёсем пёрер мар, темиçешер секретарь пулмалла, ăçта кирлё çавăнта чугунçул транспорчё енёпе ёçлекен секретарь тата шывçул транспорчё енёпе ёçлекен секретарь пулмалла тăвасси çинчен ыйту лартнă. Транспорт политотделёсем парти обкомёсемпе хула комитечёсене пăхăнса тăмалла тăвасси тата политотделсем территориальнăй партпрганизацисенчен уйăрăлса тăнине пётересси çинчен ыйту лартнă.

Парти организацийёсене промышленноçпа транспорт еннелле çавăрни кăçалхи çулах плансене вăтам шутпа кăна мар, тата уйрăмăн илнё кашни предприятипе кашни çул тăрăх та тултарассине пурнăçлама тивёçлё, мёншён тесен пирён çёршывра кая юлса пыракан заводсем, фабрикăсем, шахтăсем, чугунçулсем пулмалла мар. Çакна ăна требовательноçа, организованноçа, ёçри культурăна хăпартмасăр, лăпланса ларас, мăнкăмăлланас шухăш-кăмăлсене хирёç кёрешмесёр, çитменлёхсене чăтса тăрассине хирёç кёрешмесёр тума май çук.

Маленков юлташ çапла каларё:

«Большевик вăл çитменлёхсене хирёç çирёп кёрешнипе, хăйёнчен нумай ыйтнипе, хăйён пётём ёçёнче тирпейлё пулнипе палăрса тăмалла. Çакăн пек вёрентет пире Сталин юлташ.

Большевикшăн государство интересёсем, хăйён тăван çёршывён интересёсем пуринчен те çýлте пулмалла. Партипе правительство решенийёсене пурнăçа кёртес тёлёшпе большевик дисциплинăллă пулмалла. Закон вăл— пуринпён те закон пулса тăрать. Эпир пурте государство тарçисем. Çакăн пек вёрентет пире Сталин юлташ».

Социализмлă индустрипе транспорта малалла ýстерсе пырас ёçре партин Пётём Союзри XVIII конференцийён ёçёсем калăма çук пысăк выран йышăнса тăраççё. Акă мёншён ёнтё пётём парти, пётём совет халăхё конференци çине тимлён пăхса тăрать.

(«Правда» умстатьи, 1941 çулти февралён 17-мёш).

Парти организацисен промышленность тата транспорт тёлёшёнчи задачисем çинчен

МАЛЕНКОВ ЮЛТАШ ДОКЛАЧЁН. МАЛАЛЛИ

Шăпах ёнтё технологи дисциплини пулманнине пула пирён промышленноçăн нумай предприятийёсенче халё те пахалăхсăр кăтартса пынă комплектлă мар продукци туса кăлараççё, çавăн пек продукци çирёплетсе панă стандартсемпе килёшсе тăмасть.

СССР Верховный Совечён Президиумё «Пахалăхсăр е комплектлă мар продукци кăларнăшăн тата обязательнăй стандартсене пăснăшăн промышленноçлă предприятисем ответлă пуласси çинчен» 1940 çулти июлён 10-мёшенче кăларнă Указ хăйён вăйне кăтартрё пулсан та, çапах та, продукци пахалăхёшён кёрешес ёçре пирён халё те çитменлёхсем нумай-ха.

Пахалăхсăр продукци туса кăларнă фактсем çине, брак туса питех те нумай материаллă хаклăксене пăсса саянă фактсем çине хуçалăх ёçёнчи нумай руководительсем тýсме çук çăмăлтайла пăхаççё. Брак тăвакансем хăйсем тунă бракшăн материаллă ответлăх тытмаççё.

Пахалăхсăр чёртавар, брак продукци туса кăларни производствăллă плансене тултарма чăмăртарать, пирён предприятисене йёркеллё ёçлеме канăрлет тата изделисен хăйне ларакан хакне хытă ýстерсе ярать. Нумай предприятисенче вăхăтра тата оперативлăн контроль туса тăни, брак пуласcине сирсе яракан контроль çук.

Технологине пăснине пётерме вăхăтăнтё, юлташсем. Мёншур предприятисенче технологиллё процессен тёрёс инструкцийёсене ёçе кёртмелле тата çав инструкцисене мёнле пăхăнса пынине контроллесе тăмалла тăвас пулать. Наркоматсем предприятисенче производствăн технологиллё процесне пăхăнас ёçре çирёпрен те çирёп дисциплина туса хума, предприятисене массăллă тата сериллё производствăра çирёпленнё технологине наркоматсем çёрк памасăр улăштарма тата изделисен производствăра çирёпленнё конструкцийёсемпе чертежёсене улшăнусем кёртме чăрса лартма тивёçлё.

Халё кивёлле ёçлеме, мёшёлтетсе, аран-аран, чухăмăн ёçлеме юраманнине пирён предприятисемпе наркоматсенчи работниксен ăнланса илме вăхăт ёнтё. Пирён предприятисем çёнё тёп-тёрёс механизмсемпе хёçпăаланнă, çав механизмсем производствăра çирёпрен те çирёп йёркеле тума, пётём ёçе техникăллă правилăсемпе инструкцисене тёп-тёрёс пăхăнса туса пыма хушаççё.

Технологири дисциплинăн тупсăмăкă мёнре пулмалла: пирён рабочисем, мастерсем тата инженерсем технологиллё операцине, нимён чухлё те аяккалла пăрăнмасăр, тёп-тёрёс тепёр хут тума тата, техникăллă условисемпе стандартсен требованийёсем тăрăх, цёри теприн евёрлё, пёр пек продукци туса кăларма вёренчёр.

Пирён кашни промышленноçлă предприяти лайăх пахалăхлă продукци туса кăларма тата хăйён фабрикин, завочён маркин чысне çýлте тытма тивёçлё.

Юлташсем, пирён предприятисенче **технологи процесёнчи çирёпрен те çирёп дисциплинăна** пăхăнмалла тăвас пулать, мёнпур предприятисенче технологиллё процессен тёрёс инструкцийёсене ёçе кёртмелле, вёсене пăхăнса пынине контроллесе тăмалла тата, çапла вара, çирёплетсе панă стандартсемпе пётёмпех килёшýллё, лайăх пахалăхлă тата **комплектлă продукци туса кăларма** тăвас пулать.

ÇЁНЁ ТЕХНИКА ЫЙТĂВЁСЕМ. Промышленноçпа транспорт предприятийёсен руководителёсем нумайёш çёнё техника пысăк выран йышăнса тăнине хакламаççё, техникăна малалла лайăхлатса пырас, çёнё машинăсем, материалсем тата изделисем туса кăларас ёçе хăнăха пырас тёлёшпе ёçлемеççё. Хаклăран та хаклă изобретенисемпе машинăсене лайăхлатмалли сёнýсем час-часах наукăпа тёпчев институчёсенче, лабораторисенче, предприятисенче çулталăкё-çулталăкёпе выртаççё тата производствăра усă курмасăрах юлаççё.

Нумай наркоматсенче техникăллă советсем техникăллă пёчёк ыйтусем тăрăх заключенисем парас тёлёшпе ёçлекен хушма-органсем пулса тăчёç, вёсем çёнё техникăна ёçе кёртес ыйтусем тăрăх чăнласа ёçлемеççё.

Хăшпёр предприятисен руководителёсем, хăйсене ансат пултăр тесе, техника аталанса пынине пăхмасăрах, çулталăкё-çулталăкёпе пёр йышши кивё продукци туса кăларассине, производствăн кивё меточёсем çинче çулталăкё-çулталăкёпе тытăнса тăрассине маларах хураççё.

Çёнё йышши продукцисен (проекчёсемпе конструкцийёсене тăвасси, вёсен сериллё производствине хăнăхса çитесси вăрахăн пулса пырать тата нумай вăхăта тăсăлать. Çавăн пирки час-часах çапла та пулать: çёнё продукцине сериллё майпа туса кăларма çав продукци кивелме пуçласан тин тытăнаççё.

Талантлă конструкторсем нумайёшё наркоматсемпе предприятисен руководителёсем енчен кирлё пулăшăва илеймеççё, çакăн пирки вёсем вăй-хăта пăрахнине кăтартса параççё.

Çёнё техника çине хвостистла, пётёмёшпех оппортунистла пăхнине пётерес пулать.

Задача çакăнта пулса тăрать: предприятисен руководителёсем, конструкторсем, наукăпа тёпчев институчёсемпе лабораторисенчи работниксем, инженерсем, техниксем, мастерсем, малта пыракан рабочисем техникăна çёнетсе лайăхлатас, çёнё машинăсем, материалсем тата изделисем тăвас ёçе вёренсе çитес тёлёшпе ырми-канми ёçлеччёр.

Пирён промышленноçри тата транспортри работниксен техникăллă шухăша чечеклентерме тата техникăн çёнё çитёнёвёсене производствăна хăвăртрах кёртме социализмлă строй паракан çавăн пекех пысăк майсемпе пётёмпех усă курас пулать. Çёнё техника ыйтăвёсем çине уйрăмах тимлён çавăрнса пăхни, **техникăна çёнетсе лайăхлатас, çёнё машинăсем, материалсем тата изделисем тăвас ёçе вёренсе çитес тёлёшпе ырми-канми ёçлени кирлё.**

ТУСА КĂЛАРАКАН ПРОДУКЦИН ХĂЙНЕ ЛАРАКАН ХАКЁ ÇИНЧЕН. Нумай фактсем промышленность тата транспорт предприятийёсен руководителёсем хуçа пек шутлама, калькуляцилеме, халăх укçи-тенкине упрама пăрахнине кăтартса параççё.

Топливăна ытлашши çунтарнинчен, чёртавара усăсăр расходланинчен, хаклă материалсене ытлашши тăкакласа пётернинчен, электроэнергине перекетлемесёр расходланинчен пирён предприятисем пысăк убыткăсем тýсеççё. Хуçалăха çавăн пек типтерсёр тытса пыни халăх интересне хирёсле ёç пулса тăрать. Унпа пирён социализмлă хуçалăх хушшинче пёрлехи нимён те çук, социализмлă хуçалăха каçнипе укçана, топливăн, чёртаварăн кашни килограмне, кашни агрегата тата станока çавтери çирёппён шута илсе, вёсенчен усă илме тăрăшни кирлё.

Нумай предприятисен руководителёсем хатёр япаласене илме хăнăхнă, хуçалăх расчечё çинчен маннă, финанс дисциплинине пăснисемпе килёшсе пурăнаççё, хуçасăрлăхпа килёшсе пурăнаççё тата вёсем хуçалăха начар тытса пыннинчен пулнă материальнăй сиене государствăн тýсме тивни çине сýрёккён пăхаççё.

Продукцин хăйне ларакан хакё — предприятин пётём ёçён пахалăхне палăртса тăракан тёп показатель. Предприятисен ёçне тёрёс ертсе пырас тесен, хăйне ларакан хакăн тёп элеменчёсем тăрăх—ёç укçи, чёртавар, топливо тата электроэнергин хакё, амортизацилеништён начислени туни, администрацине управлени расхочёсем тăрăх—пёр япалана тума чăннипе мён чухлё расход тухнине пёлмелле, предприятин экономика тёлёшёнчи ёçне çакăн пек туса пымалла: хăйне ларакан хакпа тупăш илес тёлёшпе тунă плансем пётёмпех пурнăçа кёччёр.

Задача çакăнта пулса тăрать: ёçе хуçасăрла туса пырассине пётермелле, предприятин экономика тёлёшёнчи ёçне вёренсе çитмелле, предприятин шалти ресурсёсемпе пётёмпех усă курмалла.

Туса кăларакан продукцин хăйне ларакан хакне тăтăшах чакарса пымалла, хуçалăх расчетне пур майсемпе те çирёплетмелле, типтерсёрлёхе тата пётерсе хумалла.

ÇЁ УКÇИ ЫЙТĂВЁСЕМ. Юлташсем, ёç укçине тёрёс организацилесси производствăна ýстерессинче питех те кирлё условисем пулса тăрать. Ёç укçи тёлёшёнчи пирён пётём политикăн тёп принципё вăл—ёççыннисене ёçён результатчёпе материально интереслентерес принцип пулса тăрать. Çак принцип пирён патра рабочисене ёç тăрăх тýленипе, ертсе пырас ёçри работниксене премиллё система тăрăх тýленине тата квалификациллё ёçе квалификацисёр ёçрен мала хунипе пурнăçа кёрсе пырать.

Сдельщина тата премиллё система ёç тухăçлăхне хăпартас ёçре, апла пулсан вара пирён пётём халăх хуçалăхне аталантарассинче питех те кирлё майсем пулса тăраççё.

Практикăра ёç укçи тёлёшпе çак тёп принципа сахал мар пăсаççё. Час-часах çакăн пек çёрёк практика пурри курăнать: лайăх ёçлекенсене хавхалантарса пымалла, ёç укçи тёлёшёнчи уравниловкăн çёрёк практикине вёçне çитиех пётермелле. Предприяти руководителёсен, цех начальникёсен тата мастерсен, малта пыракан техникăна организацилле-хуçалăхлă мероприятисене ёçе кёртнё май, ёç нормине ýстересснне пурнăçа кёртсе пымалла.

Юлташсем, **ёç укçи тёлёшёнче** рабочисене ёç тăрăх, ертсе пырас ёçри работниксене премиллё система тăрăх тата квалификациллё ёçён квалификацисёр ёçрен нумайрах тýлесе, **лайăх ёçлекенсене материально хавхалантарса пырас принципа çирёпрен тата çине тăрса пурнăçа кёртсе пымалла.**

ПРОГУЛСЕМ ТАТА ÇЫРЕН ХАЙСЕН ИРЕКЛЕПЕ ТУХСА КАЙНИСЕМ ÇИНЧЕН. СССР Верховный Совечён Президиумё «Сакăр сехетлё ёç кунё çине, çичё кунлă ёç эрни çине куçасси тата рабочисемпе служащисене предприятисемпе учрежденисенчен хăйсен ирёкпе тухса кайма чарасси çинчен» 1940 çулти июнён 26-мёшёнче йышăннă постановление пурнăçа кёртни предприятисенчи ёç дисциплинине чылаях лайăхлатрё.

Анчах та, юлташсем, фабрикăсенче, заводсенче, рудниксенче, шахтăсенче, чугунçулсем çинче прогулсем çаплах пётмен-ха. Предприятисенчи хуçалăх, парти, профсоюз тата комсомол организацийёсен руководителёсен пёр пайё ёç дисциплинине çирёплетес тёлёшпе начар ёçлет. Çавăн пек руководителсем ёç вăйё улшăнса тăнине прогулсене хирёç кёрешес задачăна кёске вăхăтлă кампани вырăнне хурса йышăнăй, прогулсем тата ёçрен хăйсен ирёкпе тухса кайнисем государствăна питех те пысăк сиен кýни çинчен, производство планёсене тултарма чарса тăни çинчен, промышленность продукцийёсене туса кăларассине чакарни çинчен маннă. Прогулсем производствăна хавшатаççё.

Юлташсем, **прогулсене йăлтах пётересс пулать.**

ПРЕДПРИЯТИСЕНЧИ ЕДИНОНАЧАЛИ ÇИНЧЕН. Парти уçăмлă та ăнланмалла директивăсем пачё пулин те, предприятие тытса пырас ёçре нумай предприятисенче халё те чăн-чăн единоначали туса хуман-ха. Директорсен приказёсем чылай чухне пурнăçа кёмесёрех юлаççё. Предприятисен директорёсем хăйсем вёсене панă правăсемпе усă курмаççё, час-часах общественнăй организацисен çурăмё хыçне пытанаççё.

Предприяти директорё предприятири ёççемшён тата производствăри йёркелёхшён пётёмпех ответлă пулса тăрать, унăн распоряженийёсене пурнăçа кёртсе пымалла. Директор хăй панă распоряженин тёрёслёхшён кăна мар, çакăн пекех тата ăна пăхăнса тăракан çынсем вăл распоряженине вăхăтра тата тёрёс пурнăçа кёртнишён те ответлă пулса тăрать.

Директор, предприяти начар ёçленине тýрре кăларас тесе, яланах çапла кăтартса панине: вăл панă распоряженисем тёрёс тата вёсене вăхăтра панă пулнă, анчах вёсене пурнăçа кёртмен, тесе кăтартса панине, чăтса тăма çук. Директор хăйне пăхăнса тăракан çынсене пёлме, панă распоряженисене пурнăçа кёртнине тёрёслеме тата хушнине туман, ёçе вăхăтра та гёплён туман работниксене лайăхрах тата ёçлёрех çынсемпе улăштарма тивёçлё.

Предприятисенче единоначалине татăклăнах çирёплетни кирлё, предприяти директорё ёçре тулли власлă руководитель, предприятири ёççемшён тата производствăри йёркелёхшён пётёмёшпех ответлă руководитель пулса тăни кирлё.

(Юлашки 2-мёш страницăра).

Национальноçсен Советне 496-мёш номерлё Шупашкар суйлав округё тăрăх, 499-мёш номерлё Вăрмар суйлав округё тăрăх тата 506-мёш номерлё Етёрне суйлав округё тăрăх депутатсем суйлас тёлёшпе пулса иртнё суйлавсен результатчёсем çинчен

Округсенчи суйлав комиссийёсем пёлтернё тăрăх, 1941 çулти февралён 16-мёшёнче Национальноçсен Советне 496-мёш номерлё Шупашкар суйлав округё тăрăх, 499-мёш номерлё Вăрмар суйлав округё тăрăх тата 506-мёш номерлё Етёрне суйлав округё тăрăх депутатсем суйлас тёлёшпе суйлавсем пулса иртнё.

Сасăланă çёре суйлав округёсенче регистрацленё суйлавçăсен пётём хисепёнчен 99,59 проценчё хутшăннă.

Коммунистсемпе беспартийнăйсен блокён кандидачёссемшён суйлава хутшăннă суйлавçăсен пётём хисепёнчен 99,05 проценчё сасăланă.

Округсенчи суйлав комиссийёсем Национальноçсен Советне депутата 496-мёш номерлё Шупашкар суйлав округё тăрăх Иван Матвеевич Чарыков юлташа, 499-мёш номерлё Вăрмар суйлав округё тăрăх Степан Ефимович Белолипецкий юлташа, 506-мёш номерлё Етёрне суйлав округё тăрăх Яков Кузьмич Павлов юлташа суйланнине регистрацленё.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧЁН ПРЕЗИДИУМЕ.

ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ

Маленков юлташ докладчĕн юлашки

ПРОИЗВОДСТВĂНА ТЕХНИКА ЕНĔПЕ ЕРТСЕ ПЫРАС ĔÇЕ ÇИРĔПЛЕТЕССИ ÇИНЧЕН. Промышленноçпа транспорт ĕçĕ тата çакăн пирки те чăрмав курать: нумай тĕлсенче инженерсемпе техниксен кадрĕсене тĕрĕс мар вырнаçтарса тухнă, вĕсемпе тĕрĕс мар усă курасçĕ.

Предприятисенче, цехсенче, урăхла каласан, тăррĕмех продукци туса кăларнă çĕрте час-часах квалификацилĕ специалистсем питех те çителĕксĕр пулаççĕ, çав вăхăтрах вĕсен пысăк хисепĕ центральнăй тата вырăнти хуçалăх учрежденийĕсен аппарачĕсенчи канцеляри ĕçĕнче вырнаçса ларнă.

Пирĕн алăра, юлташсем, промышленноçлă наркоматсен системинче аслă шкултан вĕренсе тухнă 214 пин специалиста тата специальнăй вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнă 164 пин специалиста мĕнле вырнаçтарса тухни çинчен калакан даннăйсем пур. Вăл даннăйсем специалистсене промышленноçра çакăн пек вырнаçтарса тухнине кăтартса параççĕ.

Аслă шкултан вĕренсе тухнă 214 пин специалистран 95 пин çынĕ е 45 проценчĕ — наркоматсен системин тĕрлĕ учрежденийĕсенче, 51 пин çынни е 24 проценчĕ — промышленноçлă предприятисен заводоуправленийĕсенче, 68 пин çынни е аслă шкултан вĕренсе тухнă пĕтĕм специалистсен 31 проценчĕ çеç вара промышленноçлă предприятисенче тăррĕмех производствăра ĕçлеççĕ.

Специальнăй вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнă 164 пин специалистран 41 пин çынни е 25 проценчĕ — наркоматсен тĕрлĕ учрежденийĕсенче, 41 пин çынни е 25 проценчĕ — промышленноçлă предприятисен заводоуправленийĕсенче, 82 пин çынни е 50 проценчĕ промышленноçлă предприятисенче тăррĕмех производствăра ĕçлеççĕ.

Нефть промышленноçĕн наркомачĕ тăрăх аслă шкулсенчен вĕренсе тухнă специалистсен 20 проценчĕ кăна тăррĕмех производствăра ĕçлет; электростанцисен наркомачĕ тăрăх — 16 процент кăна; çĕркăмăрăк промышленноçĕн наркомачĕ тăрăх — 27 процент; пулă промышленноçĕн наркомачĕ тăрăх —9 процент кăна; вăрман промышленноçĕн наркомачĕ тăрăх — 24 процент.

Аслă шкултан вĕренсе тухнă специалистсене вырнаçтарса тухас тата вĕсемпе усă курас ĕç промышленноçлă ытти наркоматсенче те çавнашкалах.

Инженерсемпе тата техниксемпе усă курас ĕçри çакнашкал тĕрĕс мар практика пирĕн халăх хуçалăхне сиен кӳрет. предприятисене кирлĕ пек техникăллă руководствăсăр тăратса хăварать. Çакна калани те çителĕклĕ, юлташсем: промышленноçра аслă шкултан вĕренсе тухнă специалистсен хисепĕ пысăк пулин те, инженерсем ĕçлеме тивĕçлĕ вырăнсенче вăл специалистсен хисепĕ питех те çителĕксĕрри палăрать.

Предприятисенчи цехсен начальникĕсен составĕнче аслă шкултан вĕренсе тухнă специалистсем 22 процент кăна, начальниксен заместителĕсен составĕнче — 32 процент, сменăсен, пролетсен, отделсен, участоксен, аггрегатсен начальникĕсен составĕнче — 20 процент тата цехсенчи инженерсен составĕнче — 60 процент. Çӳлте кăтартнă должноçсенче ĕçлекен ытти мĕнпур работниксен специальнăй техникăллă образовани çук.

Хуçалăха тытса пырас ĕç аппарачĕ, пирĕн çĕршыври государствăн мĕнпур аппарачĕ пекех, питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăл аппаратра квалификацилĕ инженерсемпе техниксен пĕрпаллă хисепĕ ĕçлеме тивĕçлĕ. Анчах та вăл аппарат хăйĕн штачĕсене тивĕçсĕр ӳстерсе ярать тата инженерсемпе, техниксемпе канцеляри ĕçĕнче усă курать пулсан, çапла туниле вĕсене производствăран пăрса ярать пулсан, çакă вăл пачах та йĕркеллĕ мар.

Инженерсемпе техниксен кадрĕсене вырнаçтарса тухас ĕçри çак йĕркесĕрлĕхе тӳрлетес пулать, центрти тата вырăнсенчи хуçалăх организацийĕсенче ĕçлекен специалистсен пĕр пайне. производствăна техника тĕлĕшĕнчен ертсе пырас ĕçе çирĕплетме, предприятисене ярас пулать.

Предприятисенче производствăна техника енчен ертсе пырас ĕçе пур майсемпе те çирĕплетни кирлĕ.

Аслă шкулсенчен вĕренсе тухакан çамрăк специалистсем тĕлĕнпе çакăн пек йĕрке туса хурас пулать: аслă шкултан вĕренсе тухнă кашни специалист предприятире производствăллă опыт илмелле, обязательнăй йĕркепех практикăллă ĕçĕн — мастер помощникĕн, мастерăн, цехри инженерăн стажне ĕçлесе иртермелле пултăр.

МАСТЕР ÇИНЧЕН. Юлташсем, пирĕн предприятисенче йĕркеллĕх туса хурас, ĕçе тĕрĕс организацилес тата технологи процесĕн çирĕп дисциплинине тăвас ĕçре мастерсем пысăк вырăн йышăнса тăма тивĕçлĕ.

Анчах та, мастера пирĕн нумай предприятисенче пулăшакан рабочи е конторщик положенине антарса тăратнă, вăл кунĕпех завод тăрăх çителĕксĕр детальсене, инструментсене тыраса чупса çӳрет е конторăри тĕрлĕ йышши ĕçсене тăвать.

Мастера ăна тивĕçлĕ мар ĕçрен хăтарас пулать.

Предприятисенче производствăна тӳррĕмех организацилекенĕ пулса тăракан **мастерăн рольне хăпартас пулать,** ĕçе çапла йĕркелесе ярас пулать: мастер производствăн хăйне çанса панă участокĕнче тулли правăллă руководитель, технологи дисциплинине пăхăнса ĕçлессишĕн тата производство планне пур показательсем тăрăх та пурнăçа кĕртессишĕн пĕтĕмĕшпех ответ тытакан руководитель пулса тăтăр.

Промышленноçпа транспорт ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерес тесе, парторганизацисен хуçалăхлă-политикăллă задачисем тĕлĕнпе йышăнма кирлĕ мерăсем çакнашкал ĕнтĕ.

IV.

ПАРТОРГАНИЗАЦИСЕН ПРОМЫШЛЕННОÇПА ТРАНСПОРТ ТĔЛĔШĔНЧИ ОРГАНИЗАЦИЛЛĔ ЗАДАЧИСЕМ

Юлташсем, промышленноçпа транспорта вăйлатас задачăна ăнăçлăн татса парас тесен, промышленноçпа транспортра пирĕн организацилле ĕçе чылаях лайăхлатас пулать.

Пире Сталин юлташ çапла вĕрентет: хуçалăх çитĕнĕвĕсем, вĕсем çирĕп пуласси тата нумай вăхăта пырасси — пĕтĕмĕшпех партиллĕ-организацилле тата партиллĕ-политикăллă ĕçĕн çитĕнĕвĕсенчен килеççĕ, çак условисемсĕр хуçалăх çитĕнĕвĕсем тĕрексĕр пулма пултараççĕ.

Промышленноçпа транспорт ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерес тесен, парторганизацисен организацилле задачисем тĕлĕнпе мĕнле мерăсем йышăнмалла-ха?

Кунта пуринчен малтан çакăн çинчен сăмах пырать: промышленноçпа транспорт наркомачĕсене тата предприятийĕсене пулăшу парас ĕçе вăйлатас шутпа, **промышленность ытларах аталаннă хуласенче, облаçсенче, крайсенче тата республикăсенче, хулари, облаçри, крайри тата республикăри промышленноçăн тĕп отраслисене кура, парти горкомĕсемпе обкомĕсен промышленность енĕпе ĕçлекен секретарĕсем пĕре мар, темиçе секретарь пулни кирлĕ,** кирлĕ çĕрте вара чугунçул транспорчĕ енĕпе ĕçлекен секретарь тата шывçул транспорчĕ енĕпе ĕçлекен секретарь пулни кирлĕ.

Пуринпĕн те палăлла, халăхи вăхăтра пирĕн парти горкомĕсемпе обкомĕсенче промышленноçпа транспорт енĕпе секретарьсенчен пĕри кăна ĕçлет. Опыт кăтартса панă тăрăх, çакă вăл пачах çителĕксĕр.

Сире салатса панă резолюци проектĕнче партин горкомĕсемпе обкомĕсен промышленноçпа транспорта ертсе пыракан секретарĕсен хисепне ӳстерме сĕннĕ.

Промышленность енĕпе ĕçлекен секретарьсене суйласа илесси — парти обкомĕсемпе горкомĕсен пысăк та кирлĕ ĕçĕ пулать. Çакă вăл — ответлă та пысăк ĕç. Ăна мĕнпур тимлĕхпе тата ответлăхпа тĕплĕн тăвас пулать.

Çак вырăнсене чи лайăх работниксене, промышленноçпа транспорт ĕçĕсене большевикла кĕрсе хутшăнма пултаракан, парторганизаци тимлĕхне сăмахпа мар, ĕçре промышленноçпа транспорт енне çапăрма пултаракан работниксене уйăрса лартас пулать.

Промышленноçпа транспорт енĕпе ĕçлекен секретарьсем предприятисенче мĕн пулса пынине лайăх пĕлмелле, вĕсенче тăтăшах пулмалла, предприятисен работникĕсемпе те, çавăн пекех тивĕçлĕ наркоматсемпе те тӳррĕмех сыхăнса тăмалла, плансене тата партин промышленноçпа транспорт тĕлĕшпе йышăннă решенийĕсене пурнăçа кĕртес ĕçре вĕсене пулăшу памалла, çав решенисене пурнăçа мĕнле кĕртсе пынине тăтăшах тĕрĕслесе тăмалла, предприятисен ĕçĕнчи çитменлĕхсене уçса кăтартмалла тата вăл çитменлĕхсене пĕтерессине пурнăçа кĕртме тăрăшмалла.

Горкомсем, обкомсем тата компартисен Центральный Комитечĕсем промышленноçпа транспорт енĕпе ĕçлекен секретарьсене суйласа илес ĕçе мĕн таран лайăх тунине сывăх вăхăтрах уйрăм хуласенчи, облаçсенчи, крайсенчи тата республикăсенчи промышленноçпа транспорт ĕçĕсен результачĕсем тăрăх хакламалла пулать.

Иккĕмĕш питех те кирлĕ организацилле задача вăл — промышленноçпа транспортра ĕçлекен кадрсене суйласа илес ĕçре парторганизацисен тимлĕхне чылаях вăйлатасси пулса тăрать.

Пуринчен малтан **промышленность предприятийĕсенчи тата чугунçулсем çинчи хуçалăх работникĕсемпе инженерно-технически работниксене сăнаса вĕренсе, лайăх пĕлсе тăрас** пулать. Çынсене çапла сăнаса вĕренмесĕр тата пĕлмесĕр, юрăхсăр работниксене улăштарасси çинчен тата пултарулла, пуçарулла работниксене пысăкрах ĕçе уйăрса лартасси çинчен тăракан ыйтăва тĕрĕс тата вăхăтра татса памасăр çук.

Юлташсем, работниксене хут тăрăх, канцеляризенче сăнаса вĕренессине пĕтерес пулать.

Кадрсене суйласа илес ĕç çине биологи енчен пăхассине пĕтерес пулать, работниксене ĕçре тĕрĕслес пулать, вĕсене ĕç тăрăх хаклас пулать, анкетăри даннăйсем тăрăх пăхса хаклас пулмасть.

Халичченех-ха, парти кăтартусем пани пулсан та, нумай парторганизацисемпе хуçалăх органĕсенче работнике лартнă чухне работникăн ĕçри пахалăхĕсемпе политикăллă пахалăхĕсене, унăн пултарулăхĕсене сăнаса вĕренес тĕлĕшпе мар, пуринчен ытларах унăн йăх-тĕпне палăртас тĕлĕшпе, унăн аслашшĕпе асламăшĕ **камсем** пулнине палăртас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Кадрсем суйласа илес ĕçри тĕп ыйту вăл — çĕнĕ работниксене тĕрĕс уйăрса лартас ыйту пулса тăрать. Лайăх, пултарулла, пуçарулла работниксене, чĕрĕ ĕçе организацилеме пĕлекен работниксене пысăкрах ĕçе хăюллăнрах уйăрса лартас пулать.

Кунта çакна ăнланса илес пулать: **сăмах партире тăракан большевиксене чăна мар, тата партире тăман большевиксене те пысăкрах ĕçе уйăрса лартасси çинчен пырать.**

Партире тăман çынсем хушшинче тӳрĕ кăмăллă тата пултарулла работниксем нумай, вĕсем партире тăмаççĕ, вĕсен коммунистла стаж çук пулсан та, вĕсем стажлă хăшпĕр коммунистсенчен лайăхрах, тӳрĕ кăмăлпа ĕçлеççĕ.

Ертсе пыракан вырăнсене партире тăракан юлташсене кăна уйăрса лартма юрать, тесе шухăшлакан работниксенчен Сталин юлташ пĕр хут çеç мар тăрăхласа кулнă. 1931 çулта хозяйственниксен канашлăвĕнче Сталин юлташ çапла каланă: «Хăшпĕр юлташсем фабрикăсенчи тата заводсенчи ертсе пыракан вырăнсене партире тăракан юлташсене çеç лартма юрать тесе шутласçĕ. Çак сăлтавпа вĕсем, час-часах сахалрах пултарулла, сахалрах тимлĕхлĕ партиенсене малти вырăна кăларса тăратса, партире тăман, пултарулла тата тимлĕхлĕ юлташсене аяккалла тĕртсе хăварасçĕ. Çакăн пек «политикăран» айвантарах, реакциллĕрех япала урăх пулма та пултарайманни çинчен каламалли те çук».

Пултарулла тата пуçарулла работниксене пысăкрах ĕçе лартса, **юрăхсăр, вăйсăр, çемçешке работниксене улăштарасси çинчен ыйтăва вăхăтра лартмалла, чĕрĕ ĕçе организацилеме пултарайман сӳпĕлтисене улăштарас пулать.**

Сайра мар тĕлсенче çапла пулать: çавнашкал нимĕне юрăхсăр, чĕрĕ ĕç тума пултарайман сӳпĕлти пĕрер ĕçе кĕрсе ларать те, çулталăкĕ-çулталăкĕпех ĕçе япăхтарса ларать. Пирĕн наркоматсем, парти обкомĕсем, хула комитечĕсем çакăн çине лăпкăн пăхса тăраççĕ, çавнашкал «работникне» кăларса ывăтас тĕлĕшпе мерăсем йышăнмаççĕ.

Пирĕн час-часах çапла та пулать. Завод уйрăмах кирлĕ продукци туса кăларас тĕлĕшпе задани илет. Вăл предприяти пуçĕнче çав заданине пурнăçа кĕртме пултаракан работник мар, хуйхă-хозяйственник, сӳпĕлти тăрать.

Обком секретарĕ çавăн пек директортан: заданине пурнăçа кĕртес ĕç мĕнле пырать, тесе ыйтать, сӳпĕлти вара: «тăрăшатпăр, секретарь юлташ», тесе ответлет. Ну, секретарĕн кăмăлĕ пулать. Тăрăшать-тĕк, ĕç пулать ĕнтĕ.

Анчах та часах çакă палăрать: нимĕнле ĕç те çук, задани те пурнăçа кĕрсе пымасть. Обком секретарĕ директортан каллех ыйтать: «Ĕç мĕнре вара, мĕншĕн задани пурнăçа кĕмест?» «Тума вĕренсе пыратпăр, секретарь юлташ», — тесе ответ парать сӳпĕлти. Секретарь çак ответпа та кăмăллă пулать. Çын ĕçе вĕренсе пырать пулсан, часах результатсем те пулĕç. Анчах ĕç малалла каймасть. Директортан каллех ыйтаççĕ: «Мĕншĕн продукцине халиччен те туса кăлармастăр?» «Ĕç малалла каймасть, секретарь юлташ, çак кунсенчех ĕçе тӳрлетсе яратпăр». Вăхăт иртет, нимĕнле продукци те çук. «Мĕн тăваççĕ унта, сирĕн заводра?»— ыйтать секретарь. «Кăлтăксемпе çитменлĕхсене пĕтерсе пыратпăр»,—ответ парать сӳпĕлти.

Çапла вăл пуçа вĕçĕхĕррисĕр çавăрать; çавăн пек директор, юлташсем, ĕмĕтленмен çĕртенех, питех те кая юлса кăштах продукци туса кăларать пулсан та, çавăн пек директор патнĕче тăтăшах продукци туса кăларассине ан кĕтĕр. Кĕтсех тăрăр, продукци кăларассине вăл пурпĕрех часах чарса лартĕ. Унтан: «Мĕн пулчĕ вара, эсир тин кăна продукци кăларма тытăннăччĕ, мĕншĕн-ха ăна чарса та лартрăр?», тесе ыйтсан, — пĕлсех тăрăр, сӳпĕлти кунта та сирĕн валли ответ тупать, ун пек чухне вăл обязательнă çапла калать: «Хатĕрлесе хунă япаласем йăлтах пĕтрĕç».

Предприятисен çакнашкал хуйхă-руководителĕсем, çакнашкал сӳпĕлтисем пирĕн обкомсен секретарĕсене çапла улталаса пурăнаççĕ ĕнтĕ.

«Тума вĕренсе пыратпăр», «чăрмав килсе тухрĕ», «кăлтăксемпе çитменлĕхсене пĕтерсе пыратпăр» текен сăмахсемпе хĕçпăшалланса, çак сӳпĕлтисем государство шучĕпе пурăнаççĕ, питех те пысăк средствăсене расходлаççĕ, халăх хуçалăхне вара нимĕн те памаççĕ.

Пирĕн нумай руководительсем çавăн пек ответсене илтеççĕ те, хуйхă-хозяйственник мĕн каласшăн пулнине тĕплĕн пĕлмеççĕ пулсан та, çав ответсемпе кăмăллă пулса лараççĕ. Çапла вара юрăра юрланă пек пулса тухать, «..кам ăна пĕлет пуль, мĕн çинчен систерет вăл» **(Кулаççĕ).** Чăнах та, юрăра мĕн çинчен сăмах пыни юлашкинчен цаллă пулать. Унта, эсир астăватăр ĕнтĕ, ку ĕçе кăштах чĕре хутшăннă, вара ĕç тупсăмĕ палăрать. Сӳпĕлтисем тĕлĕшпе вара ĕç çав-савах уçăмлăн палăрмасăр юлать. Кунта чĕре çукрах пулас. Пуçпа ĕçленни кирлĕ, сӳпĕлтие вăхăтра курса илес пулать.

Çакăн пыши хозяйственниксене çут тĕнчене туртса кăларма вăхăт ĕнтĕ, юлташсем. **Чĕрĕ ĕç тума пултарайман сӳпĕлтисене, вĕсем партивцсем е беспартийнăйсем пулса тăнине пăхмасăр, ĕçрен хăтарас тата пĕчĕкрех ĕçе лартас пулать.**

Пирĕн, юлташсем, тата тепĕр ыйтăш работниксем — тăмсайсем пур. Çакăн пеккисем те пур пирĕн. Тăмсай вăл — нимĕн те пĕлмен тата пĕлме те тăрăшман çын. Тăмсай вăл техникăна вĕренмест, çĕнĕ техникăна йышăнмасть, технологи çинчен нимĕн те пĕлмест, предприяти экономикине ăнланмасть тата ăнлачашăн та мар. Ун вырăнне вара çавăн пек тăмсайăн мăнкăмăллăх ытлашшипех пур.

Тăмсай: эпĕ пурне те пĕлетĕп, маçăн вĕренмелли нимĕн те çук, тесе шанса ларать, тăмсая вăл мĕне те пушшех пĕлменни çинчен каласа ĕнентерме пултаракан вăй çутçанталăкра та çук.

Хăйĕн геройĕсенчен пĕрин çинчен Салтыков-Щедрин çапла сырнă: «Вăл технолог та, инженер та пулман. вăл юханшывсем пулса кайнин процесĕ çинчен те, вĕсем мĕнле законсене пула тăвалла мар, анаталла юхни çинчен те нимĕн те пĕлмен, анчах та вăл çакна хытă шанса тăнă: çак вырăнтан çав вырăна çити, тесе кăтартса памалла кăна, вара çав кăтартнă вырăна материк пулса тăрĕ, унтан вара юханшыв, халичченхи пекех, сылтăмалла та сулахаялла юхса выртĕ».

Çавнашкал тăмсайсем пирĕн вăхăта та пур-ха. Çавăн пек тăмсай предприяти директорĕн вырăнне-н, çул начальникĕн вырăнне-н е мĕнле те пулин урăх вырăна йышăнать те, нимĕн çинчен те итлемест. Ăна эсĕ çĕнĕ техчика çинчен, технологи процесне лайăхлатма кирли çинчен, предприятире йĕркелĕхпе тасалăх туса хурасси çинчен калатăн, вăл вара хăлха таранах пылчăк ăшĕнче ларать. хăйĕн тăмсайла никĕсĕ çинче тĕреклĕн ларать, хăйне паракан нимĕнле канашсем çине те, нимĕнле кăтартусем çине те çавăрăнса пăхмасть. **(Залра хускаласçĕ).** Эпĕ, тет вăл, хамах тавçăратăп, эпĕ пурне те хамах тума пултаратăп. Çитменнине тата ялан пекех хăй пролетариат хушшинчен тухнипе вĕсĕнленет.

Хăех курăнать ĕнтĕ, çавнашкал руководитель лайăхрах пахалăхлă çĕнĕ продукци туса кăларас ĕç çине куçасса, ĕçе çĕнĕ техника кĕртессе нимĕн кĕтмелли те çук.

Çавăн пек тăмсайсене тăрă шыв çине кăларас пулать, вĕсене руководство ĕçĕнчен хăваласа кăларас пулать, юлташсем. Предприятисене ертсе пырас ĕçре тата ертсе пыракан ыйтăва тĕрĕс тата çынсене çирĕп, çынсене çирĕп, çынсене çирĕп,

ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ

Февралĕн 17-мĕшĕнчи ирхи ларăвăн дневникĕ

Февралĕн 17-мĕшĕнчи ирхи ларура,— ларăва председатель пулса ертсе пыракан **А. А. Жданов** юлташ ӳснă, — **Г. М. Маленков** юлташ «Парти организацисен промышленность тата транспорт тĕлĕшĕнчи задачисем çинчен» тунă доклад тăрăх пренисем пуçланнă.

Пренире чи малтан ВКП(б) Ленинград хула комитечĕн секретарĕ **А. А. Кузнецов** юлташ тухса калана.

— Маленков юлташăн докладĕнчен эпир, — тесе калать Кузнецов юлташ,—правительство, парти, Сталин юлташ кулленех тăрăшнине пула. промышленноçпа транспорт 1940 çулта чылай çитĕнӳсем тунине куратпăр. Анчах эпир çĕнĕ, кăткăс условисенче пурăнатпăр тата ĕçлетпĕр, вăл промышленноçа татах та лайăхрах, организацилĕрех ĕçлеме, ытларах тата лайăхрах пахалăхлă продукци пама хушать. Доклад промышленноçпа транспорт ĕçĕнчи тĕп ситменлĕхсене уçса палăртрĕ тата çав ситменлĕхсене хăварт пĕтермелли çулсене кăтартса пачĕ.

Ленин хули — совет çĕршывĕнчи ертсе пыракан промышленноçлă центрсенчен пĕри. Паллах ĕнтĕ, партин Ленинград организацийĕ промышленноçпа транспорт ыйтăвĕсем çине пысăк тимлĕхпе пăхать.

1940 çулта Ленинград промышленноçĕ çĕнĕрен палла çитĕнӳсем турĕ. 1940 çул планне срокченех тултарнă. Продукци 1939 çултинчен 11,6 процент нумайрах туса кăларнă. Оборона промышленноçĕн çитĕнĕвĕсем уйрăмах палăрса тăраççĕ; йывăр тата вăтам машиностроени, текстиль тата апатçимĕç промышленноçĕ хăйсен ĕçĕсене палăрмаллăхах лайăхлатрĕç.

Кузнецов юлташ малалла Ленинград промышленноçĕн, ĕçĕнчи ситменлĕхсем çинче чарăнса тăрать. Вăл ĕç дисциплинине çирĕплетессишĕн, ĕçе организацилессишĕн, чĕртаварпа тата оборудование тĕрĕс усă курассишĕн малалла кĕрешме кирли çинчен палăртса калать. Мĕнле те пулин çĕнĕ задани парсан яланах оборудовани ыйтса çĕнĕрен заявка параççĕ. Çав вăхăтрах, предприятисен руководителĕсем предприятисенче оборудованине чăннипе мĕн чухлĕ ĕçлеттеринне пĕлмеççĕ тата нумай станоксене, вĕсемпе пит лайăх усă курма май пур çĕртенех, «кивелнĕ» станоксен хисепне кĕртеççĕ. Ленинград горкомĕ, предприятисен пĕр ушкăнĕнче оборудованине мĕнле усă курнине тĕрĕслесе, çавăн пек станоксем 3.800 тупрĕ, ремесленнăй училищесем валли оборудовани тупмалла чухне кун пек станоксем тата 2.700 палăртнă.

Хăйĕн сăмахне вĕçлесе, Кузнецов юлташ Ленинградри заводсемпе фабрикăсем çине Центральный Комитет тата Сталин юлташ хăй уйрăмах тимлĕн пăхса пулăшма пынине çинчен калать. Центральный Комитет тата Сталин юлташ çакăн пек тимлĕн пăхса пулăшни çине партин Ленинградри организацийĕ — Жданов юлташ ертсе пыракан организаци—промышленноçăн пур отраслисене те çĕнĕрен хăватлăн çĕклесе яма пĕтĕм вăя хурса ĕçленипе ответлет.

Трибуна çинче — КП(б)У Харьков область комитечĕн секретарĕ **А. А. Епишев** юлташ.

Маленков юлташ хăйĕн докладĕнче парти организацисен промышленноçа ертсе пырăç ĕçĕнчи тĕп ситменлĕхсене анализ туни, — тесе калать вăл, — пире хуçалăхăн пур отраслисене те тата уйрăмăнах унăн ертсе пыракан отрасльне — промышленноçа — большевикла стильпе ертсе пыма вĕрентет.

Харьковри машинăсем тăвакан промышленность 1940 çулта валовой продукци тата таварлă продукци туса кăларас тĕлĕшпе хăйĕн планне иртерсе тултарчĕ.

Анчах, парторганизацисем тата, чи малтан, партин обласрипе хулари комитечĕсем кашни предприятин экономикине тарăнрахăн кĕрсе пăхнă пулсан, ăна контроллессипе пулăшассине лайăхрах тата конкретлăрах туса пынă пулсан, вара ĕçĕн результачĕсем чылай ытларах пулнă пулĕччĕç.

Епишев юлташ пахалăхшăн çителĕксĕр кĕрешнине палăртакан чылай примерсем илсе кăтартать. Вăл малалла наркоматсен тата главксен планировани ĕçĕнчи çитменлĕхсене тата предприятисене ертсе пырас ĕçре канцелярла-бюрократла методсем пуррине палла тăвать.

Парти организацисем çине, вăл хисепрех партин обласри тата хулари комитечĕсем çине те, — тесе калать Епишев юлташ, — айăпăн пĕчĕк мар пайĕ тивет, вĕсем заводсем тĕп заданисене мĕнле пурнăçа кĕртнине çителĕксĕр контроллесе тăнă.

ВКП(б) Молотовский обкомĕн секретарĕ **Н. И. Гусаров** юлташ хăйĕн сăмахĕнче Молотовский обласри чи пысăк предприятисем 1940 çулта плансене иртерсе тултарни çинчен пĕлтерет. Анчах, тесе калать Гусаров юлташ, çакна эпир çителĕклĕ тесе шутлама пултараймастпăр тата шутламалла та мар: обласри чылай предприятисем плана тултарман, плана тултарманнисенчен нумайĕшĕ — хăйсен производствинчи майсемпе пĕтĕмпех усă курассинчен инçе-ха. Уйрăмăн илсен, ку вăл Кизелри çĕркăмăк бассейнне тивет, вăл Урал промышленноçĕмĕн пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Технологи дисциплинине пăснисем çине примиренецла пăхнисем, хăшпĕр вăхăтра ывтăнса ĕçленисем, штурмсем, производствăн йĕркеллĕ ритмне пăснисем халĕ те çаплах пур-ха. Парти организацийĕсем час-часах хуçалăх органĕсен ĕçĕсене контроллеме хăйсене панă правăемпе çителĕксĕр усă курассĕ, промышленноçа ертсе пыракасине статистика даннăйĕсене пухасси **туса хураççĕ,** предприятисен ĕçне анализ тумаççĕ, çăмăл, тĕплĕн шухăшласа туман решенисем йышăнаççĕ. Молотовский обласри промышленность ӳçĕн экономикăллă показателĕсене чылайăшне анализ туса, Гусаров юлташ çакна кăтартса парать: плана тултаракан предприятисенче те оборудованине лайăхрах усă курас т. ыт. тĕлĕшпе темĕн чухлех ĕçсем тумалла.

В. И. Бойцов юлташ (ВКП(б) Орел обкомĕн секретарĕ) Орел облаçĕнче плана ирттерсе тултарнă предприятисемпе пĕрлех, çителĕксĕр ĕçлекен заводсемпе фабрикăсем пуррине палăртать.

— Завод директорĕ, — тесе калать вăл, — предприятин тулли владăлă руководителĕ пулса тăман-ха, тата партин хăшпĕр организацийĕсем халĕ те большевикла стильпе ертсе пыма çирĕп единоначали кирлине ăнланса илмен.

Бойцов юлташ предприятисенчи тата наркоматсенчи тĕрĕс йĕркеленĕ планировани пит пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен калать. Планированикая юлнине пĕтерес пулать, плана вăхăтра тăвассине тата кашни предприятине, цеха, сменăна, бригадăна вăхăтра çитерессине пурнăçа кĕртмелле.

ВКП(б) Приморский крайкомĕн секретарĕ **Н. М. Пегов** юлташ Приморский крайри промышленноçăн тĕп отраслисем — çĕркăмăк, пулă тытакан, суднăсем юсакан промышленноссем, шывсул тата чугунсул транспорчĕ — плана тултарас ĕçре малалла кайни çинчен калать. Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи пароходство хăйĕн ĕçне нумай лайăхлатрĕ, Приморье чугунçулĕ плана тултарчĕ. Анчах, пулă тытакан промышленность тата вăрман промышленноçĕ, çĕркăмăк промышленноçĕн уйрăм шахтисем юлса пыраççĕ-ха. Вĕсем юлса пыни крайри промышленноçа ертсе пырас ĕçре пысăк çитменлĕхсем пурринчен килет.

Пегов юлташ крайкомсен, обкомсен промышленность отделĕсен ĕçĕ промышленность ĕçне çĕклеме пулăшни çинчен палăртса калать. Анчах промышленность отделĕсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур-ха, вĕсем час-часах райкомсен е уйрăм хозяйственниксен ĕçĕсене тума тытăнаççĕ, хăшпĕр чухне тата юлхав хозяйственниксене хӳтлекен хӳме вырăнне те пулса тăраççĕ.

Пегов юлташ малалла предприятисенче профсоюз тата комсомол организацисем, уйрăмах профсоюз организацисем, япăх ĕçлени çинчен калать. Ĕç тухăçлăхне хăпартассишĕн, социализмлă ăмăртăва сарассишĕн, производствăна рационализацилессишĕн т. ыт. те кĕрешес çĕрте профсоюз организацисен рольне татăклăнах ӳстермелле.

План — вăл предприятин законĕ, предприятин пĕтĕм ĕçĕсем çак план тăрăх пулса пыраççĕ. Анчах планировани ĕçĕнче,—тет Пегов юлташ, — пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Пегов юлташ çакăн пек факт илсе кăтартатать: Наркомморфлотăн комиссийĕ Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи пароходство ĕçĕсене тĕрĕсленĕ хыççăн, плана мĕнчухлĕ тултарнине кăтартакан процента шутласа кăларайман, вара плана мĕнчухлĕ тултарнине тăватă тĕрлĕ шутласа пăхнине Мускава илсе кайнă.

Приморьери большевиксем, — тесе калать Пегов юлташ хăйĕн сăмахне вĕçлесе,—парти, Сталин юлташ кăтартса паракан задачăсене пурнăçа кĕртме пĕтĕм вăя хурса ĕçлĕç.

Унтан Мускав хулинчи ВКП(б) Железнодорожнăй райкомĕн секретарĕ **М. И. Друзяков** юлташ тухса калана, — вăл чугунсул транспорчĕн Мускаври виçĕ отделенин ĕçĕсем çинчен каласа панă тата ВКП(б) Железнодорожнăй райкомĕ, çавăн пекех Москва—Сортировочная депо парторганизацийĕ туса пыракан партиллĕ-политикăллă ĕç опычĕпе паллаштарнă.

Стахановла движени сарăлса пынă май депо ĕçĕнче çĕнĕ методсемпе усă курма пуçласçĕ, вĕсем ĕç тухăçлăхне ӳстерме тата государствăн средствисене перекетлеме пысăк майсем уçса параççĕ. Сăмахран, беспартийнăй кондуктор Смыслов юлташ передаточнăй станцăсенче вагонсене пуçтарса поезд тумалли çĕнĕ май сĕннĕ, ку май çав станцăсенче поездсем ытлашши вăхăт тăрассине пĕтĕмпех пĕтерме май панă.

Друзяков юлташ малалла НКПС Политуправленин ĕçĕнчи çитменлĕхсем çинчен калать.

Маленков юлташăн докладĕнче политотделсен ĕçĕсем çинчен ыйтăва тĕрĕс партинне палăртса, Друзяков юлташ политотделсем партин обкомĕсемпе горкомĕсене пăхăнса тăмалла тăвас пулать, тесе шутлать.

ВКП(б) Ярославль обкомĕн секретарĕ **Н. С. Патоличев** юлташ сăмах илет.

— Партин Ярославль организацийĕ гекстиль промышленноçĕн наркомачĕпе пĕрле, — тет вăл, — облаçри хаччен кая юлса пынă текстиль предприятийĕсене малта пыракансен ретне кăларчĕ. Çав предприятисем хальхи вăхăтра пурте плана пĕтĕмпех тултарса пыраççĕ. Çапах та, Ярославльре чылай предприятисем халичченех пĕр тиксĕс ĕçлесе пымаççĕ-ха. Çав предприятисенче халĕ те йĕркелĕх çук-ха, вĕсенче пылчăк тата ăпăр-тапăрсем чылай. Маленков юлташ докладĕнче Ярославль обкомне критикленни питех те тĕрĕс, тесе калать Патоличев юлташ.

Патоличев юлташ Ярославль обкомĕ тĕрлĕрен наркоматсемпе мĕнле сыхăнса ĕçлени çинче чарăнса тăрать. Çавăн пек сыхăнса ĕçлесси халиччен пурнăçа кĕртсе пынă пулсан, çав вăхăтрах, вăл пачах тĕрĕс мар. Промышленность ĕçне тĕпренех лайăхлатас задача, пирĕн предприятисене техника енчен ӳстерес задача, — тесе калать Патоличев юлташ,—заводсене организацине техника енчен ертсе пырас тĕлĕшпе наркоматсемпе обком пĕр шухăшлă пулса ĕçлеме ыйтать.

Унтан СССР нефть промышленноçĕн Халăх Комиссарĕ **И. К. Седин** юлташ сăмах тухса каланă. Партин Центральный Комитечĕ йышăннă мерăсене пула, — тесе палла тунă вăл, — нефть тата газ кăларасси ӳссе пыма пуçларĕ. Кăçал уйăх çурă хушшинче нефть промышленноçĕн наркомачĕ иртнĕ çулти çав вăхăтпах танлаштарсан нефтьпе газа 21,6 процент ытларах панă. Нефте ĕçлесе кăларас ĕçре те çитĕнӳсем пур.

Седин юлташ малалла нефть промышленноçĕнче хăйне валли машинăсем тăвакан база туса хуни çинчен, нефтеаппаратура тата пăраламалли станоксем туса кăларасси ӳсни çинчен калать.

Нефть промышленноçĕн тĕп бази пулса тăракан Баку çинчен тĕплĕн чарăнса тăрса, Седин юлташ çапла пĕлтерет: çак район юлашки çулсем хушшинче нефть тупас тата нефте ĕçлесе кăларас плана ирттерсе тултарса пырать.

— Ĕç акă мĕнре,—тет вăл, — Бакура нефть кăларас тĕлĕшпе Азербайджанри коммунистла партин Центральный Комитечĕне партин Баку комитечĕ конкретлăн, тĕплĕн ĕçлеççĕ. Майкоп тата Башкири районĕсем Баку парторганизацин опытне илес пулсан, татах та ытларах нефть кăларма пулăччĕ.

Узбекистанри Коммунистсен (большевиксен) партийĕн Центральный Комитечĕн секретарĕ **У. Юсупов** юлташ хăйĕн сăмахĕнче Узбекистанăн социализмлă промышленноçĕнчи ӳсĕмĕн яр-уçă цифрисене илсе кăтартать. Узбекистан промышленноçĕнче революциччен пĕтĕмпе те 18 пин рабочи çеç пулнă, кунта узбек тата вырăнти ытти национальноçсенчен тухнă рабочисем пĕрĕн çеç шутланнă. Сталинла пятилеткăсен çулĕсенче Узбекистан промышленноçне 2.150 миллион тенкĕ укçа хывнă. Халăх хуçалăхĕн пĕтĕм продукци хисепĕнче промышленность тӳпи 1940 çулта 70 процента çити ӳснĕ. Промышленноçра ĕçлекен рабочисен хисепĕ 374 пин çынна çити ӳснĕ, вĕсенчен узбексем, казахсем, таджиксем 215 пин çын шутланаççĕ.

Юсупов юлташ Узбекистанра промышленноçа парти енчен ертсе пырас ĕçре чылай çитменлĕхсем пуррине палăртать.

Партин Узбекистанри организацийĕсем енчен промышленность ĕçĕ çине çителĕксĕр çăвăрăнса пăхнине пула, тет Юсупов юлташ, промышленность продукцине туса кăларассине ӳстермелли пысăк майсем республикăри нумайĕш предприятисенче усă курмасăрах юлаççĕ.

Юсупов юлташ Узбекистанра цветной металсен, алюмини, молибден, фольфрам промышленноçне аталантарма калама çук чаплă малашлăх пурри çинчен калать.

Хăйĕн сăмахне вĕçлесе, Юсупов юлташ çапла калать:

— Узбек халăхĕ, халăхсен ăслă та юратнă çулпуçĕ Сталин юлташ ертсе пынипе, XVIII партконференци решенийĕсене большевикла хастарлăхпа тата çине тăрса пурнăçа кĕртсе пырса, пирĕн тăван çĕршыври мĕнпур халăхсемпе пĕрле коммунизм туса çитерессишĕн пыракан кĕрешӳре çĕнĕ çĕнтерӳсем тăвать. (ТАСС).

Февралĕн 17-мĕшĕнчи каçхи ларăвăн дневникĕ

Февралĕн 17-мĕшĕнче каçхи ларура Маленков юлташăн доклачĕ тăрăх пренисем пынă.

Председатель пулса ертсе пыраканĕ **Жданов** юлташ ВКП(б) Мускав комитечĕпе Мускав хула комитечĕн секретарĕне **А. С. Щербаков** юлташа сăмах парать.

— 1940 çулта, — тет Щербаков юлташ,—çĕршыври промышленность туса кăларнă продукцин 22,6 процентне Мускав хулипе облаçĕнчи промышленность панă.

Мускав хулипе облаçĕнчи промышленность 1940 çул планне ирттерсе тултарнă. 1939 çултипе танлаштарсан валовой продукци кăларасси 13,1 процент ӳснĕ, продукци хисепĕ 3,6 миллиард тенкĕлĕх ӳснĕ. Оборона предприятийĕсен, машиностроенин чылай отраслисем, инструментальнăй промышленность хăйсен производствисене уйрăмăнах вăйлăн ӳстернĕ.

Анчах та промышленность ĕçне валовой продукци тăрăх е таварлă продукци кăларни тăрăх кăна хаклама юрамасть. Плана штурмовщинăсăр ĕçлесе кашни кун, кашни декадăра, кашни уйăхра тултарса пымалла, плана тултарса пымалла, обязательнăй йĕркепех комплектлă, ассортиментлă, кирлĕ пек лайăх пахалăхлă продукци туса кăлармалла, продукцин хăйне ларакан хакĕ палăртса хунă виçерен иртмелле мар. Пирĕн ĕçе çак енчен пăхса хаклас пулсан, — тет Щербаков юлташ,—халĕ ăна урăхла хаклама юрамасть, — тӳррипех калас пулать: çитменлĕхсем пирĕн питех те, питех те нумай-ха. Çак çитменлĕхсене Маленков юлташ хăйĕн докладĕнче большевикла сивĕччĕн ӳсса пачĕ.

Мускав хулипе облаçĕнчи предприятисем пурте мар-ха хăйсен задачисене пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Чылай предприятисем 1940 çул планне тултарман.

Щербаков юлташ Мускав хулипе облаçĕнчи чылай предприятисем çитекскĕр ĕçленни сăлтавĕсем çинчен тĕплĕн каласа парать. Вăл сăлтавсем—хăшпĕр наркоматсем тата партин çырăнти организацийĕсем конкретлă мар, хут çырни тăрăх ертсе пынинче, предприятисен руководителĕсем мăнкăмăлланса ларнинче, технологи процесне пăснинче, тирпейсĕрлĕхре, организованность çуккинче, прогулсене, простойсене тата брака хирĕç начар кĕрешнинче.

Хăйĕн сăмахĕн чылаях пысăк пайĕнче Щербаков юлташ пирĕн промышленноçри усă курман резервсене анализ туса парать. Прогулсене хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе тата продукци пахалăхне, унăн комплектноçне лайăхлатас тĕлĕшпе туса ирттермелли ĕçсене пĕр сăмахсăр çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пыни вăл—ĕç тухăçлăхне хăпартмалли тата продукци кăларассине ӳстермелли питех те пысăк резерв. Мускаври чылай предприятисем çĕнĕ йышши продукцисем туса кăларма вĕренес ĕçре, производствăн çĕнĕ техникине вĕренес ĕçре чылаях пысăк çитĕнӳсем тунă. Анчах та нумай тĕлĕнче консерваторсем малта пыракан техникăна производствăна кĕртес ĕçе хирĕç тăраççĕ. Хуçалăх работникĕсем, парторганизацисен руководителĕсем техника новаторĕсене яланах мар пулăшу параççĕ.

Хăйĕн выступленийĕн вĕçĕнче Щербаков юлташ çапла калать:

— Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕн решенийĕсемпе хĕçпăшалланса, парти организацийĕсем промышленноçпа транспорт еннелле татăклăнах çаварăнĕç. Парти организацийĕссем партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕн решенийĕсене çирĕпĕн пурнăçа кĕртсе пырас ĕçе мĕнпур ĕççыннисене мобилизацилĕç, хăйсен коммунистла партийĕ тавра, большевикла Центральный Комитет тавра тата хăйсен çулпуçĕ Сталин юлташ тавра тачă пĕтĕссе тăракан Совет Союзĕнчи халăхсем коммунизм строительстванче çĕнĕ пысăк çĕнтерӳсем тăвĕç.

Ораторăн юлашки сăмахĕсене саламласа нумайччен алă çупаççĕ.

ВКП(б) Башкир обкомĕн секретарĕ **И. Ф. Аношин** юлташ хăйĕн выступленийĕнче çакăн çинчен калана: сталинла икĕ пятилетка çулĕсенче Башкир АССР Республикинче чылаях вăйлăн аталаннă промышленность—Пĕтĕм Союзĕпе палла вырăн йышăнса тăракан вуншар пысăк заводсем туса хунă. Хальхи вăхăтра Икĕмĕш Баку кăларакан пĕтĕм нефтьăн 80 процентне Башкир республики парать. Ылттăн промышленноçĕпе çăмăл промышленность 1940 çул планне ăнăçлăн тултарнă. Анчах та, тет Аношин юлташ, чиртнĕ çулта Башкиринчи нефть промышленноçĕ плана тултарайман.

Нефть промышленноçĕ кая юлса пынишĕн пуринчен малтан партин Башкир облаçĕнчи комитечĕ тата нефть районĕсенчи парторганизацисем ответлă пулса тăнине йышăнса, Аношин юлташ СССР Нефть промышленноçĕн Халăх Комиссариачĕ умне чылай претензисем кăларса тăратать, нефть промышленноçĕн наркомачĕ Башкирин нефтяниксене кирлĕ чухлĕ пулăшу памасть.

Латвири Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕн секретарĕ **Я. Э. Калнберзин** юлташ хăй сăмахĕн пуçламĕшĕнче Латви ССР Республикинче çурçул хушшинче, Латви Совет Союзĕн составне кĕнĕренле иртнĕ çурçул хушшинче Латви ССР Республики анлăн ӳссе чечекленни çинчен калана. Вăл çапла калать: Латви халăхĕ çирĕптсе пăрахнă реакцилĕ плутократиллĕ правительство империализмлă вăрçăччен чылаях вăйлăн аталаннă промышленноçлă çĕршывран ютçĕршывсенчи капитализмăн аграрлă хушмалчи туса хунă. 1914 çулта вăтам шутпа пĕр предприяти пуçне 119 рабочи тивнĕ, 1939 çулта — 16 рабочи кăна. Капиталистсем советлă çамрăк республика валли арканса пĕтнĕ тата юхăнса çитнĕ предприятисем, юхăнса пĕтнĕ чугунçулсем хăварнă, çулталăк хушшинче ӳссе хутшăнакан вăрмана вунă çул малалла касса пĕтернĕ.

Сталин юлташ çакăн пек задани патчĕ: çывăхри 4—5 çул хушшинче Латвине аграрлă республикăран малта пыракан индустриллĕ республика туса хумалла, терĕ. 1941 çул валли республикăри наркоматсем тăрăх промышленноçлă производствăна чылаях ӳстерме планласа хунă. Латвине Совет Союзĕн социализмлă системине кĕртни кăна çавăн пек ӳсĕм тума май парать. Латвин Совет Союзĕнчи тăванлă республикăсене хăваласа çитмелле, мĕнпур резервсемпе тата мĕнпур майсемпе усă курмалла.

Латви промышленноçĕнче 3 звено — электроэнерги паракан çăлкуççем, топливо, стройматериалсем пĕтĕм ĕçе тата сăпа паракан вырăн йышăнса тăраççĕ. Латвире торфăн питех те пысăк запасĕсем пур, вĕсемпе усă курманпа пĕрех-ха.

Латвин пурне те кирлĕ таварсем туса кăларас тата вырăнти чĕртавартан продовольстви туса кăларас ĕçре пигех те пысăк условисем пур.

Чугунçулсем çинче, портсенче, тинĕс транспортĕнче пысăк ĕç туса ирттернĕ. Анчах та унта чăн-чăн большевикла йĕркелĕх çук-ха. Кивĕ традицисем вăйлă-ха. Латвири большевиксен задачи — çав традицисене çĕнтересси, малта пыракансен опытне саласи пулса тăрать.

Латвири коммунистсемпе комсомолецсем промышленноçа ертсе пырас ĕçри ыйтусене конкретлăн лартма, брак тăвассине хирĕç кĕрешме, большевикла дисциплинăшăн кĕрешме вĕреneççĕ.

Юлашкинчен Калнберзин юлташ Ленинла-Сталинла Центральный Комитет тата юратнă Сталин юлташ ертсе пынипе Латвири большевиксем малалла пыма, тăванлă республикăсене хăваласа çитме хатĕр тăни çинчен калана сăмахсене саламласа конференци нумайччен алă çупать.

КП(б)У Ворошиловград обкомĕн секретарĕ **А. И. Гаевой** юлташ 1940 çулăн иккĕмĕш çурçулĕнче çĕркăмăк промышленноçĕ хăйĕн ĕçне лайăхлатни çинчен калакан цифрăсем илсе кăтартать. Çапла пулсан та область çĕршыв умĕнче парăмла-ха. Ĕç çапла лайăхланни вăл Центральный Комитет 1939 çулти ноябрь уйăхĕнче КП(б)У Ворошиловград обкомне вăл çĕркăмăк тресчĕсемпе шахтисенчи пысăк çитменлĕхсем çине оппортунистла лăпкăн пăхса тăни çинчен кăтартса панă хыççăн пулса иртнĕ. Обкомпа горкомсем шахтăсен ĕçне тимлĕн асăрхаса тăман, партиллĕ-политикăллă ĕç производствăллă ĕçрен уйăрăлса тăнă.

Центральный Комитет Ворошиловград облаçĕнчи большевиксене производство еннелле çавăрнă. Шахтăсене 195 инженер тата техник янă. Ĕçе татса паракан участоксенче руководствăна çирĕплетнĕ. Питех те лайăх ĕçлекен работниксене палăртнă.

Хальхи вăхăтра шахтăсенче ĕçлекен 10.046 коммунистран 6 пин коммунисчĕ тӳррĕмех çĕр айĕнче ĕçлеççĕ. Вĕсен чи пысăк пайĕ нормăсене тултарса тата ирттерсе тултарса пырать.

Центральный Комитет тата СССР Совнаркомĕ йышăннă решени хыççăн çĕркăмăк кăларасси ӳснĕ. Гаевой юлташ конференцине, 1941 çулти плана тултарăпăр кăна мар, çĕршыв умĕнче кăмăк енĕпе парăма кĕнине те парса татăпăр, тесе шантарса калать.

ВКП(б) Иваново обкомĕн секретарĕ **Г. Н. Пальцев** юлташ Маленков юлташ докладĕнче Иваново облаçĕнчи парторганизацине критиклени тĕрĕс тесе йышăнать. 1940 çул пуçламĕшĕче фабрикăсенче простойсем пулнă. Парти организацийĕ электростанцисемпе фабрикăсем валли топливо тăратассишĕн тăрăшман.

Обласри малта пыракан пиравăр фабрикисен примерĕ тăрăх Пальцев юлташ предприятисен хăйсен ĕçне лайăхлатмалли питех те пысăк майсем пуррине кăтартса парать. Стахановла движени пуçланиччен Ново-Ивановски мануфактурăра пĕр ткач вăтам шутпа 3,9 станокпа ĕçленĕ. Хальхи вăхăтра 12 ткач кăна 8 станокпа ĕçлеççĕ, ытти майсем пурте 9—20-шер станокпа ĕçлеççĕ. Фабрика плана ирттерсе тултарса пырать. Ленин ячĕпе тăракан фабрика тата «Красная Талка» фабрика стахановла ĕçлеççĕ. Питех те пысăк меланжевăй комбинатра (унта 12 чин рабочи тата служащи) ĕç нормине тултарса пыман рабочи пĕр çын та çук. Комбинат 1940 çулти плана пур показательсем тăрăх та срокченех тултарнă, планран ирттерсе 11 миллион тенкĕ накоплени панă.

Çакнашкал ĕнтĕ малта пыракан предприятисем. Анчах нумай фабрикăсем плансене тултарса пымаççĕ. Çакăнпа пĕрлех вĕсем кая юлса пынине асăрхамаççĕ, мĕншĕн тесен «вăтам даннăйсемпе» лăпланса ларма хăнăхнă.

Пальцев юлташ çакна паллă тăвать: пир-авăр промышленноçĕн. наркомачĕ производство ыйтăвĕсене — çип арлас ĕçпе пир-авăр тĕртес ĕç хушшинчи диспропорцине пĕтерес, инçетрен турттарса килмелли топливо вырăнне вырăнти топливăпа усă курас ыйтусене татса парас тĕлĕшпе васкамасăр ĕçлет.

Тинĕс флочĕн Халăх Комиссарĕ **С. С. Дукельский** юлташ тинĕс флочĕн ĕçĕнчи ситменлĕхсене тата тинĕс флочĕн наркомачĕ канцелярла-бюрократла методсемпе ертсе пынине Маленков юлташ критикленине йăлтах тĕрĕс тесе йышăнать, çак критикăран тухса тăракан уроксене пĕтĕмĕшпех ăнланса илĕпĕр, тесе калать.

Дукельский юлташ çакна паллă тăвать: партин Центральный Комитечĕ тата Сталин юлташ хăй тинĕс флочĕшĕн, уйрăмăн илсен, портсене техника тĕлĕшĕнчен пуянлатассишĕн питех те пысăк тимлĕхпе тăрăшаççĕ. 1941 çулта тинĕс флотне механизаци валли хăçан та пулин паninчен 15 хут нумайрах укçа-тенкĕ параççĕ.

Тинĕс транспортĕнчи большевиксем умĕнче, тет юлашкинчен Дукельский юлташ, тинĕс флочĕ кая юлса пынине пĕтерес тĕлĕшпе пысăк задача тăрать.

Азербайджанри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕн секретарĕ **М. Д. Багиров** юлташ парти, правительство тата Сталин юлташ Азербайджанри нефть промышленноçĕшĕн калама çук пысăк тимлĕхпе тăрăшни çинчен калать. Çак тимлĕхпе хавхаланса çĕкленсе, 1940 çулта нефтяниксем çĕнĕ çитĕнӳсем тунă — ĕç тухăçлăхĕ хăпарнă, продукци кăларасси ӳснĕ. Анчах та, тет Багиров юлташ, Азербайджанри парторганизацисем нефть промышленноçĕнчи партиллĕ-политикăллă ĕçе çĕнĕлле йĕркелесе ярайман-ха, ăна Сталин юлташ ВКП(б) XVIII съездĕнче тунă докладра партнă задачăсен виçи таран хăпартма пултарайман-ха. Парти работникĕсемпе хуçалăх работникĕсен ертсе пыракан кадрĕсене кирлĕ пек тарăннăн сăнаса вĕренмеççĕ. Нумай инженерно-технически работниксем çине вĕсемшĕн выраннă мар функцисем, тĕрлĕрен вак-тĕвек ĕçсем хурса тултарнă, çакна пула вĕсем ӳсмеççĕ, вĕренмеççĕ, хăйсен ĕçĕн техники çине çителĕклĕ тарăннăн пăхмаççĕ.

Хăйĕн сăмахĕн чылаях пысăк пайĕнче Багиров юлташ нефть промышленноçĕнчи шалти резервсемпе усă курас ыйтусем çинчен, уйрăмăн илсен скважинăсене эксплоатацилес ĕçе лайăхлатасси çинчен, тăкаксене хирĕç кĕрешесси çинчен калать. Ку тĕлĕшпе пирвайхи утăмсене кăна тунă-ха — малашне кунта питех те пысăк ĕç туса ирттермелле, çак ĕç çине парторганизацисен тимлĕн пăхмалла.

Малалла Багиров юлташ научнăй организацисен, геолого-разведочнăй организацисен тата нефть промышленноçĕ валли оборудовани валли хатĕрлекен предприятисен ĕçĕнчи çитменлĕхсем çинче чарăнса тăрать. Вăл чылай наркоматсен, уйрăмăн илсен, тинĕс флочĕн наркомачĕн ĕçĕсене çивĕччĕн критиклет.

Хăйĕн выступленийĕн вĕçĕнче Багиров юлташ конференцине çапла шантарса калать: Азербайджанри большевиксем, нефть промышленноçĕн — халăх хуçалăхĕн питех те кирлĕ отраслин — планне тултарассишĕн тата ирттерсе тултарассишĕн мĕн кирлине йăлтах тăвĕç.

Юлашкинчен каçхи ларура КП(б)У Днепропетровск обкомĕн секретарĕ **С. Б. Задионченко** юлташ тухса калать. Вăл хура металлурги предприятийĕсенчи партиллĕ-политикăллă ĕç çинчен калать. Производство экономикипе технологийĕн ыйтăвĕсем çине парторганизацисем тимлĕрехĕн çавăрăнса пăхма пуçларĕç, вĕсене парти пухăвĕсенче тата активсенче сӳтесеяваççĕ. Партиллĕ-техникăллă конференцисене пухни усăллă пулни усçăнах палăрчĕ. Çапла, сăмахран, Кривой Рогри партиллĕ-техникăллă конференци бурăнни васкавлă меточĕсемпе ĕçлессине пуçарса яракан Семиволос юлташăн докладне сӳтсе-явнă т. ыт. те.

Ильич ячĕпе тăракан шахтăри бурщик коммунист Алексей Семиволос тимĕр рудисен бассейнĕсенчи ĕç тухăçлăхне хăпартмалли питех те пысăк майсене уçса панă. Партин Кривой Рогри хула комитечĕ Семиволос методне сарас тĕлĕшпе пысăк ĕç туса ирттернĕ. Кривой Рог бассейнĕнчи шахтерсемпе Донбасс шахтерĕсем хушшинчи ăмăрту чаплă результатсем панă. Ăмăрту пуçланнăранпа 4 уйăх хушшинче бассейн тăрăх руда кăлармалли плана 104,8 процент тултарнă, хатĕрленӳллĕ ĕçсен планне те ирттерсе тултарнă.

Малалла Задионченко юлташ ĕç тухăçлăхне малалла хăпартса пырас ĕçри усă курман резервсем çинчен калать. Алексей Семиволос меточĕпе ĕçлекенсен хисепĕ кунсеренех ӳссе пырать, вĕсем палăртса çирĕплетнĕ нормăсене нумай ирттерсе тултараççĕ.

Задионченко юлташăн выступленийĕ хыççăн февралĕн 17-мĕшĕнчи каçхи лару хупăнать.

Çитес лару февралĕн 18-мĕшĕнче кăнтăрла 11 сехетре пулать. (ТАСС).

ПĔТĔМ СОЮЗРИ XVIII ПАРТКОНФЕРЕНЦИ ЯЧĔПЕ

Стахановецсем партконференци ячĕпе сталинла вахтăна тăнă

ÇĔМĔРЛЕ, февралĕн 17-мĕш. (**Хамăр корр.**). Древкомбинатри рабочисем ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ уçăлнă куна производствăллă çĕнĕ çитĕнӳсемпе паллă турĕç. 4-мĕш №-лĕ цехри стахановецсем сталинла вахтăна тăрса паха результатсем кăтартрĕç. Февралĕн 15-мĕшĕнче П. Грачев ертсе пыракан смена плана 169 процент, Семен Бойков юлташ смени 162 процент тултарчĕç. Уйрăм стахановкăсем — Наталия Никитина нормăна 244 проц., Варвара Варенева 286 проц. тултарчĕç т. ыт.

Енер хулари ĕççыннисем ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцинче Маленков юлташ тунă доклада радио тăрăх вуласа пынине пысăк тимлĕхпе итлерĕç. Комбинатна «Большевик» заводри цехсенче рабочисем доклада коллективлăн итленĕ.

— Маленков юлташ кăтартса панă çитменлĕхсем пирĕн комбината та пырса тивеççĕ. Çав çитменлĕхсене сывăх вăхăтрах пĕтермелле тата вĕсене пĕтереççĕ те. Маленков юлташ кадрсем пирки питех те тĕрĕс калать. Чăн та ĕнтĕ пирĕн предприятисенче çамрăксене, хастарлă çынсене ертсе пырас ĕçсене хăюллăнтарах куçармалла, — терĕ комбинатра ĕçлекен Васильев юлташ.

Паян предприятисенче агитаторсем хăçатсем тăрăх Маленков юлташ доклади рабочисем хушшинче вуласа тытăнчĕç.

Икĕ лесхоз ăмăртăвĕ

ХĔРЛЕ ЧУТАЙ, февралĕн 17-мĕш. (**Телефонпа**). Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конферен

Суту-илӳ кадрĕсене суйласа илесси тата воспитани парасси

Февралĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа апрелĕн 1-мĕшне çитиччен ялти кооперативсен тата райсоюзсен правленисен отчечĕсемпе суйлавĕсем пулса иртеççĕ. Суйлавсем СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1939 çулти январĕн 26-мĕшĕнче «Потребитель кооперацине ĕçĕсем çинчен» йышăннă постановленине, СССР Верховный Совет Президиумĕ иртнĕ çулти июлĕн 10-мĕшĕнче, августăн 10-мĕшĕнче кăларнă Указсене тата партипе правительство ĕçхалăхне куллен кирлĕ таварсем тата продовольстви туса кăларассине вăйлатасси çинчен йышăннă постановленине мĕнле пурнăçланине тĕрĕслес паллăпа иртеççĕ. Отчетпа суйлав кампанине таварçаврăнăш планне тултарассишĕн, пурлăха тирпейлĕ тытассишĕн, растратăсене, пурлăха çаратассине пĕтересситĕн кĕрешнипе çыхăнтармалла.

ВКП(б) XVII съездĕнче Сталин юлташ çапла каланă: «Советлă суту-илĕве сарса ярасси питех те кирлĕ задача пулса тăрать, ăна татса памасăр малалла кайма çук», тенĕ.

Сталин юлташăн çак кăтартуне асра тытса, республикăри суту-илӳ организацийĕсем советлă суту-илӳ ĕçне аталантарса пырас тĕлĕшпе сахал мар ĕçлерĕç. Магазинсен, ларексен шучĕ тата ваккăн суту-илӳ тăвасси чылай ӳсрĕ. Финанс хуçалăхĕ те лайăхланчĕ. Çапла, Чăвашсоюз, Чăвашторг тата столовăйсемпе ресторансен тресчĕ 1940 çулта 7 миллион тенкĕ ытларах накоплени тунă.

Анчах та, çак çитĕнӳсем суту-илӳ организацисен ĕçĕнчи çитменлĕхсене витме пултараймаççĕ. 1940 çулта суту-илӳ организацисем, чи малтан потребитель союзĕсем çителĕксĕр ĕçлерĕç. 1940 çулта республикăра вакăн сутă тăвас плана 76,8 процент кăна тултарнă. Суту-илӳ организацисем 120 миллион тенкĕлĕх товар парса çитереймен, çак шутран 75 миллионĕ потребитель кооперацийĕ çине ӳкет. Коопинсоюзпа Промсоюз питĕ начар ĕçлерĕç, вĕсем ваккăн суту-илӳ тăвас плана 62—71 процент кăна тултарнă. Столовăйсемпе ресторансен тресчĕ 1940 çулта лайăхрах ĕçлерĕ, вăл таварçаврăнăш планне 124 процент тултарнă.

Вырăнти промышленность тата промкооперации туса кăларакан таварсемпе сутă тума пĕлменни, тепĕр чухне юриех сутă тăвасшăн пулманни суту-илӳ организацисен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕх пулаçа тăрать. 1940 çулта пĕтĕм таварçаврăнăш планĕнче вырăнти мĕртавартан тунă таварсемпе продовольствисем пурĕ те 10 процент кăна йышăннă.

Дебиторла парăмсем пысăкки, растратăсемпе çаратусем нумайăн, ĕçри хуçасăрлăх — çаксем пурте суту-илӳ организацисен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсем пулаççĕ. Суту-илӳ организацисен хăшпĕр руководителĕсем таварсене, инвентарьсене, оборудованисене тирпейлĕ тытаканнипе пулнă тăваксене те убытка шутне кĕртеççĕ.

Суту-илӳ организацисем çителĕксĕр ĕçленин тĕп çăлтавĕсенчен пĕри вăл—ертсе пыракан кадрсене суйласа илес, вĕсене вырнаçтарса тухас тата воспитани парас ĕçе начар йĕркелени пулать. Суту-илӳ работникĕсем нумайăшĕ тӳрĕ кăмăлпа, тăрăшса ĕçлеççĕ, суту-илӳ ĕçĕнче стахановецсемпе ударниксем те сахал мар, вĕсене пĕтĕм халăх хисеплет. Вĕсем советлă суту-илӳшĕн большевикла хастарлăхпа кĕрешеççĕ. Шупашкарти 4-мĕш номерлĕ магазин заведующийĕ пулса М. Ф. Стайнова юлташ ĕçлет. Кунта растрата та, çарату та çук, продавецсем пурте пĕр-пĕринпе социализмла ăмăртса ĕçлеççĕ. Стайнова юлташ планпа пăхман таварсем туянас тĕлĕшпе нумай ĕçлет. Лайăх ĕçленĕшĕн ăна Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕн грамотине парса наградăланă. Çак магазинри продавец Токарева юлташ иртнĕ çулти тăваттăмĕш квартал планне 176 процент тултарнă, вăл обществăлла ĕçе активлăн хутшăнса ĕçлет. Çĕмĕрле хуличи пĕрремĕш номерлĕ магазин заведующийĕ Грязнов, Чăвашторгăн Çĕмĕрле отделенийĕн 21-мĕш номерлĕ магазин заведующийĕ Добровольский, Улатăрти отделенин 9-мĕш номерлĕ магазинĕн продавецĕ Лезин, Улатăрти столовăйри повар Шаргаев юлташсем те тăрăшса ĕçлеççĕ, ĕçре лайăх примерсем кăтартаççĕ.

Кадрсене вĕсен ĕçлĕ тата политикăлла пахалăхне шута илсе вырнаçтарнă çĕрте суту-илӳ те лайăх пулса пырать. Шупашкарти торгăн иккĕмĕш тата тăваттăмĕш номерлĕ магазинĕсене илсе кăтартни те çителĕклĕ. Çак магазинсем таса та культурăллă, вĕсенче растрата çук, магазинсенче ĕçлекенсем пурте социализмла ăмăртса ĕçлеççĕ, суту-илӳ ĕçĕн техникине тăрăшса вĕренеççĕ.

Суту-илӳ организацисен руководителĕсем кадрсене пĕлсе суйласа илнĕ, вĕсене ĕçе тĕрĕс вырнаçтарса тухнă, практикăлла ĕçре вĕренсе пынă çĕрте аппарата шанчăкăр этемсем лекеймеççĕ. Ун пек çĕрте суту-илӳ ĕçĕ те ăнăçлă пулса пырать.

Анчах та партин, советăн тата суту-илӳ органĕсен хăшпĕр руководителĕсем кадрсемпе кирлĕ пек ĕлчемеççĕха. Вĕсем кадрсене суйласа илесси тата ĕçе лартасси çине питĕ те çăмăллăн пăхаççĕ. Ун пек руководительсем çынсене нимĕн тĕрĕслемесĕрех ĕçе илеççĕ, çакна пула суту-илӳ организацине шанчăкăр çынсем кĕрсе каяççĕ. Кам та пулин: «эпĕ суту-илӳ ĕçне лайăх пĕлетĕп» тесе каласанах, торгсем е райпотребсоюзсем ăна васкасах ĕçе илеççĕ, темиçе пин тенкĕлĕх пурлăх шанса параççĕ. Шупашкарти, Çĕмĕрлери, Улатăрти, Канашри хăшпĕр магазинсенче темиçе хутчен судпа айăпланнă çынсем халĕ те ĕçлеççĕ, çакă вăл суту-илӳ организацисен руководителĕсем кадрсене суйласа илесине ĕçе лартасси çине çиелтен пăхни çинчен калать.

Суту-илӳ организацисен хăшпĕр руководителĕсем работниксен личнăй делисене йĕркелемесси çине те ответсăр пăхаççĕ. Красноармейский, Пĕпреç, Кузакино районĕсенче потребитель кооперации системинче ĕçлекен нумай работниксен личнăй делисем çук, пуримсем те суту-илӳ кадрĕсен сăн-сăлатне тĕплĕн кăтартса памаççĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи потребитель кооперации системинче 177 çын ĕçлет, райсоюз руководителĕсем пĕр работник çинчен те тĕплĕн характеристика пама пулгараймаççĕ. ВКП(б) Етĕрне, Куславкка, Советский райкомĕсем те суту-илӳ кадрĕсене суйласа илес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха.

Кадрсене суйласа илесси тата вĕсене çăнаса вĕренесси çине çиелтен пăхнă пирки суту-илӳ организацисене жуликсем, растратчиксем, политика тĕлĕшĕнчен шанчăкăр çынсем кĕрсе каяççĕ. Суту-илӳ организацисенче, уйрăмăнах потребитель кооперации системинче, растратăсемпе çаратусем нумайăн хăшпĕр ялпо, райсоюз руководителĕсем, Чăвашсоюзăн кадрсен отделĕ начар ĕçленине кăтартса парать.

Суту-илӳн ытти организацисенче те кадрсене суйласа илесси çителĕксĕр ăнăçсăр. Леспродторг системинче (директорĕ Федоров юлташ) 1940 çулта ăна 300 пин тенкĕ ытла растрата тулнă. Леспродторг руководителĕсем тимсĕр пулнă пирки хăшпĕр çынсем питĕ нумай растрата тунă. Çĕмĕрле Леспродторгĕнчи закупщик пулса ĕçленĕ Артемьев 1940 çулти июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне 682 тенкĕ растрата тунинпе палăртнă, анчах та ăна çийĕнчех ответ тыттарман, вара вăл кайран татах 14.046 тенкĕ растрата тунă та таçта тарса пытаннă.

Судпа прокуратура органĕсен социализмлă пурлăха çаратакансене тата вĕсене пулăшакансене хирĕç хаярăн кĕрешмелле. Анчах та судпа прокуратура органĕсен хăшпĕр работникĕсем çакнашкал преступниксем çине чылай чухне либерална пăхаççĕ, вĕсене хӳтлес çул çине тăни те пулкалать. Çапла, Октябрьский районри халăх судьи Петров, Елчĕк районĕнчи прокурор Сергеев, Пĕпреç районĕнчи прокурор Молгачев тата Шăмăршă районĕнчи прокурор Филиппов т. ыт. те растратчиксемпе пĕрле пĕрмаях ĕçсе çисе пурăннă, вĕсене ответ тыттармалли ĕççене юри чăсса пынă, преступниксене хута кĕнĕ. Кувакино, Хĕрлĕ Чутай тата Советский районĕсенчи халăх сучĕсем те растратчиксен ĕçне пăхса тухассине вăрăма чăсни палăрать.

Партипе совет органĕсен растратчиксемпе вăрăсене хирĕç кĕрешме пĕтĕм ĕççыннисене мобилизацилемелле. судпа прокуратура органĕсен жуликсен ĕçне вăхăтра пăхса тухса совет законĕ хушнă тăрăх тивĕçлипе ответ тыттармалла.

Суту-илӳ кадрĕсем улшăнса тăрассине пĕтересе пулать. Халĕ лавкасенче, магазинсенче ĕçлекенсем питĕ хăвăрт улшăнса тăраççĕ-ха. Куславкка тата Пăрачкав районĕсенче суту-илӳ кадрĕсем улшăнса тăрасси 71—80 процента çитет. Магазин заведующийĕсем тата продавецсем кăна мар, ертсе пыракан работниксем те час-часах улшăнса тăраççĕ. 1941 çулта 11 райсоюз председателĕ, главнăй бухгалтерсем 12, райпотни суту-илӳ отделĕсен заведующисем 20, ялпо председателĕсем 59 çын улшăннă. Чăвашсоюз аппаратĕнче ĕçлекенсем пĕрмаях улшăнса тăрассине те пĕтермен.

Кадрсем улшăнса тăрасси партин вырăнти организацийĕсем çак ĕç çине çителĕксĕр çавăрăнса пăхнинчен те килет. Хĕрлĕ Чутай, Улатăр, Çĕрпӳ, Сĕнтĕрвăрри тата Сĕнтĕр райкомĕсем кадрсене ĕçре çирĕплетессишĕн, воспитани парассишĕн питĕ сахал тăрăшаççĕ.

Ялпосен тата райсоюзсен отчетпа суйлав кампанине ирттерме ВКП(б) райкомĕсен тĕплĕн хатĕрленмелле, ăна организованно ирттерсе, суту-илӳ ĕçне туса пыма тĕрĕсленнĕ, шанчăклă çынсене суйласа лартмалла.

Ялти кооперативсене ертсе пыракан кадрсене суйласа илесси çине парти райкомĕсемпе суту-илӳ организацисен уйрăмăнах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Иртнĕ суйлавсенче тунă йăнăшсене кăçал тумалла мар. Иртнĕ суйлавсене парти райкомĕсем енчен çителĕксĕр ертсе пынă. Çакна кăçал тумалла мар, суйлав кампанине ВКП(б) райкомĕсен оперативлă ертсе пымалла.

Кадрсемпе куллен ĕçлесси вăл — вĕсемшĕн тăрăшмаллине пĕлтерет. Советлă суту-илӳ работникĕсене хăйсен политикăллă пĕлӳне ӳстерме пулăшмалла, марксизм-ленинизм теорипе хĕçпăшаллантармалла.

Суту-илӳ работникĕсене воспитани парасси—партиллĕ ĕç, ăна куллен туса пымалла. Парти райкомĕсен кооперации работникĕсене вĕрентес тĕлĕшпе куллен ĕçлемелле.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ вырăнти чĕтавартан таварсем тата продовольстви туса кăларассине вăйлатасси çинчен йышăннă постановлени таварçаврăнăшне пысăклатма çул уçса парать. Суту-илӳ организацийĕсен вырăнти промышленноçа çĕнĕ таварсем, продовольствисем туса кăларма хатĕрлемелле.

Советлă суту-илӳ работникĕсен культурăллă пулмалла, советлă суту-илӳн принципне çирĕп пăхăнмалла, ĕççыннисемшĕн тăрăшмалла. Ĕç çине социализмла пăхса пример кăтартакансене, государство пурлăхĕшĕн тăрăшакансене пур майсемпе те пулăшмалла, стахановецсен опытне сармалла, вĕсен йышне куллен ӳстермелле.

МАТВЕЕВ.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ.

Коммунистсемпе беспартийнăйсен сталинла блокĕн чапла çĕнтерĕвĕ

1941 çулти февралĕн 16-мĕшĕнче Шупашкарти 7-мĕш №-лĕ суйлав участокĕнче. УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: суйлавçăсем бюллетеньсене суйлав ещĕкне ярассĕ. А. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

100 проценчĕпех суйлава хутшăнчĕç

-ЭЛĔК, февралĕн 17-мĕш. **(Телефонпа хамăр корр.).** Февралĕн 16-мĕшĕнче районра суйлав округĕ тăрăх ял Совечĕсене çĕнĕ депутатсем суйларĕç. Списока кĕртнĕ суйлавçăсем суйлавсене 100 проценчĕпех хутшăннă. Суйлава хутшăннă суйлавçăсенчен 98,8 проценчĕ коммунистсемпе беспартийнăйсен блокĕ тăратнă кандидатсемшĕн сасăланă.

Вырăнти Советсене депутата суйланă çынсенчен ултăшĕ арçынсем, пĕр хĕрарăм. Суйланă депутатсем хушшинче ВКП(б) членĕсемпе кандидачĕсем 3 çын, ытти сем беспартийнăйсем.

Пысăк хаваслăхпа

СĔНТĔР, февралĕн 16-мĕш. **(Телефонпа).** Ирхине 5 сехетре Чуракасси суйлав участокне илемлĕн тумланнă суйлавçăсем пухăнма пуçларĕç. 6 сехетре суйлав комисси председателĕ суйлав пуçланни çинчен пĕлтерет, суйлавçăсене сасăлама чĕнет. Чи малтан «Красный маяк» колхоз членĕ О. Лазарева юлташ бюллетень илсе И. М. Чарыков юлташăн сасăлать.

Суйлавçăсем суйлав участокне йĕркеллĕ пырса тăраççĕ. Вĕсем коммунистсемпе беспартийнăйсен блокĕн кандидачĕшĕн пысăк хаваслăхпа, тулли кăмăлпа сасăлаççĕ. 65 çулхи В. Туритова хăйĕн çемьипе — 4 суйлавçăпа пынă. С. Романов сасăласа тухсан:

— Эпĕ партин шанчăклă ывăлĕшĕн Иван Матвеевич Чарыков юлташăн сасăларăм, вăл СССР Верховный Совечĕн депутачĕ пулма тивĕçлĕ çын, — терĕ.

Суйлав участокĕнче Ильинка сельповĕ буфет организациленĕ. Агитаторсем суйлав комиссине пулăшаççĕ. Малтанхи пĕр сехет хушшинче 105 суйлавçă сасăларĕç.

Г. СОЛОВЬЕВ.

Бракланă бюллетеньсем пачах пулман

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ, февралĕн 17-мĕш. **(Телефонпа).** Хырлукасси суйлав участокĕ ирхине шăп 6 сехетре уçăлчĕ. Суйлавçăсем йĕркеллĕн килсе сасăлаççĕ.

Суйлавçăсем валли вăхăта культурăллă ирттерме мĕн кирлисене пурне те туса панă. Ирхине 6 сехетрен пуçласа каçхине 12 сехетченех буфет ĕçлерĕ. Участокра 699 суйлавçă. Суйлав комисси кăтартса панă тăрăх, мĕнпур суйлавçăсенчен 99,58 проценчĕ суйлава хутшăннă. Бракланă бюллетеньсем пĕрре те пулман.

Ватă колхозниксемпе колхозницăсене суйлав участокне лашапа илсе пынă тата леçсе янă.

П. ТИХОНОВ.

Калама çук пысăк активлăх

ЕТĔРНЕ, февралĕн 17-мĕш. **(Телефон тăрăх).** Февралĕн 16-мĕш — Етĕрне суйлав округĕ тăрăх СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйламалли кун — пысăк хаваслăхпа иртрĕ. Етĕрне, Советский, Хĕрлĕ Чутай тата Элĕк районĕсенчи суйлавçăсем коммунистсемпе беспартийнăйсен сталинла блокĕ тăратнă кандидатшăн Яков Кузьмич Павлов юлташăн пысăк çĕкленӳпе сасăларĕç. Етĕрне хулинчи 2-мĕш, 29-мĕш тата 22-мĕш суйлав участокĕсенчи суйлавçăсем 100 проценчĕпе суйлава хутшăнса пурте Я. К. Павлов юлташăн сасăларĕç.

Т. ЯРАНДАЙКИН.

Советлă Грузия 20 çул тултарас умĕн

ТБИЛИСИ, февралĕн 15-мĕш. (ТАСС). Республикăри ĕççыннисем Грузире совет власçĕ туса хунăранпа 20 çул тултарнă куна палăртма тума хатĕрленеççĕ. Февралĕн 24-мĕшĕнче хуласемпе районсенче ĕççынни депутачĕсен Советĕсен савăнăçлă сессийĕсем, колхозсенче, совхозсенче тата МТС-сенче савăнăçлă пухусем пуласçĕ тата Грузи ССР Верховный Совечĕн юбилейлă сессийĕ пулать. Февралĕн 25-мĕшĕнче, мухтавлă юбилей кунĕ, пур çĕрте те митингсемпе демонстрацисем пуласçĕ, халăх вăййисемпе гулянийĕсене, физкультурниксен выступленийĕсене организацилеççĕ.

Тбилисире пысăк выставка уçăлать, вăл выставка грузин халăхĕ 20 çул хушшинче социализм строительствинче туна çитĕнӳсене кăтартса парать.

Германи правительствин делегацийĕ Мускава килнĕ

Кăçалхи февралĕн 15-мĕшĕнче Германи правительствин Делегацийĕ — ССР Союзĕпе Германин Совет Союзĕпе Германи хушшинчи Игорка юханшывĕ патĕнчен Балти тинĕсĕ патне çити чиккине демаркаци тата редемаркаци тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен Чикĕри Хутăшлă Центральнăй Комиссири Делегаци — Мускава килсе çитнĕ.

Делегаци составĕнче çаксем килнĕ: Германи Делегацийĕн Председателĕ Полномочнăй Министр г. фон Залкен, Делегаци членĕсем — ютçĕршыв ĕçĕсен министерствин советникĕ г. Кордал, полковник г. фон Гагендорф, ялхуçалăх министерствин советникĕ г. Тэнесманн, Правительство Советникĕ г. Эллергорст тата Правительство Советникĕн экспертĕ г. Янссен.

Белорусски вокзалта Делегацине саксем кĕтсе илнĕ: ССР Союзĕпе Германин Чикĕри Центральнăй Комиссийĕнчи Совет Делегацийĕн Председателĕ Л. М. Куроптев юлташ, Совет Делегацийĕн Генеральнăй Секретарĕ И. А. Рябов юлташ, çавăн пекех тата посольство советникĕ полномочнăй министр г-н фон Типпельскирхпа пĕрле Германин Мускаври посольствин çынĕсем.

Европăри тата Африкăри вăрçă

(Вăрçă ĕçĕсен дневникĕ.)

Рейтер агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Кăнтăр-Африкăн Итали Сомалийĕнчи войскисем тинĕс хĕрринпе 400 километр малалла кайнă.

Хĕвелтухăç Африкăра фронтăн çурçĕр участокĕнче, Керен районĕнче, тесе каланă Итали сводкинче, пĕрпĕрин çине артиллеририн пенĕ. Англичансен атакисене йăлтах сирсе янă. Англи сводкинче кăтартнă тăрăх, Керен районĕнче Англи войскисем противника вăйлăн хĕсеççĕ. Англичансем малаллах кайса пыраççĕ.

Абиссинире Судан войскисем Голубой Нил районĕнче малалла куçса пыраççĕ. Англичансем кунта Курмук тĕкен поста каллех йышăннă. Англи авиацийĕ италянецсен пĕр çĕре пухăнса тăнă войскисем, мототранспорт тата çар объекчĕсем çине час-часах пыра-пыра тапăнать.

Çурçĕр Африкăра Джарабуб районĕнче (кăнтăр Киренаикăра, Египет чикки çывăхĕнче) вăрçă ĕçĕсем вăйланнă. Англичансем, мотомехчаçсем пулăшнипе, тесе каланă Итали сводкинче, вăйлăн атакăсем тунă, анчах италянецсем вĕсен атакисене сирсе янă.

Германи авиацийĕ Киренаикăри опорнăй пунктсем çине çав-çавах пыра-пыра тапăнать. Германи самолечĕсем, тесе каланă Германи сводкинче, Бенгази районĕнче Англин пĕр çĕре пухăнса тăнă войскисем çине бомбăсем пăрахнă.

Вăтаçĕр тинĕс бассейнĕнче, Германипе Итали сводкисенче кăтартнă тăрăх, Германипе Итали бомбардировщикĕсем Мальта утравĕ çине пырса тапăннă, унта Микабба аэродромĕ çине бомбăсем пăрахнă. Кунсăр пуçне, Крит утравĕ çине те бомбăсем пăрахнă. Англи самолечĕсем Италин Бриндизи порчĕ тата Родос утравĕ çине бомбăсем пăрахнă.

Албанире хаяр çапăçусем пыраççĕ. Итали командованийĕн сводкинче кăтартнă тăрăх, Итали авиацийĕн соединенийĕсем грексен опорнăй пункчĕсем, коммуникацийĕсемпе оборона позицийĕсем çине, çавăн пекех пĕр çĕре пухăнса тăнă войскăсемпе транспорт колоннисем çине бомбăсем вăйлăн пăрахнă. Греци войскисем, тесе пĕлтернĕ Греци çарĕн верховнăй командованийĕн коммюникинче, чылай пунктсенче итальянецсене хăйсен позицийĕсенчен хĕссе кăларнă. Греци бомбардировщикĕсем фронт районĕнче итальянецсен чылай çар объекчĕсем çине ăнăçлăн пырса тапăннă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ун вăйлă çапăçусем центральнăй фронтра пулса иртнĕ. Греци войскисем, артиллерипе авиаци пулăшнипе, паллă вырăнта тăракан позицисене чылай турткаса илнĕ. Тепеленепе Клисура хушшинче вĕсем пиллĕк километра яхăн малалла кайнă. Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, грексем 2000 итальянеца тытса кăна илнĕ.

Германи командованийĕн сводкинче кăтартнă тăрăх, Германи бомбардировщикĕсем кăнтăр-хĕвелтухăç Англири аэродромсем, çар лагерĕсем, портсен сооруженийĕсем тата вăрçă хатĕрĕсем тăвакан завод çине пырса тапăннă. Германин подводнăй лодкисем тата бомбардировщиксен соединенийĕсем Англипе Норвеги çыранĕсем патĕнче Англин темиçе суднине путарнă. Германин инçете перекен артиллерийĕ февралĕн 16-мĕшĕнче каллех кăнтăр-хĕвелтухăç Англири вăрçă тĕлĕшĕнчен пысăк вырăнта тăракан объектсем çине пенĕ.

Февралĕн 16-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле, тесе пĕлтерет Рейтер агентстви, Англи самолечĕсем Рур облачĕнчи промышленность объекчĕсем çине вăйлăн пырса тапăннă. Кунсăр пуçне, Англи авиацийĕ Франципе Голландин оккупациленĕ территорийĕсенчи хăтлăх объектсем çине бомбăсем пăрахнă; сăмахран, бомбăсем Роттердам çине пăрахнă.

Февралĕн 17-мĕш. (ТАСС).

Италири лару-тăру çинчен Франкфуртер цейтунг“ хаçат мĕн çырать

„

БЕРЛИН, февралĕн 17-мĕш. (ТАСС). «Франкфуртер цейтунг» хаçат Италири лару-тăру çинчен статья пичетлесе кăларнă. Италие, хальхи вăхăтра Англипе унăн империне çапма пултарнă пĕтех, калама çук вăйлăн пырса çапнине кăтартса парса, хаçат çапла çырать: «Вăрçă пирĕн союзника питех те йывăр сухатусем кӳчĕ. Юлашки уйăхсенчи событисем Италишĕн йывăр испытанисем пулчĕç. Çĕршыв вăрçăна чи пирвайхи хут вăйлăн туйса илнĕ, ун çинчен хăçан та пулин: «çак вăрçăпа танлаштарсан, халиччен пулнă мĕнпур вăрçăсем пĕчĕк вырăнта тăрăççĕ», тесе калĕç. Вăрçа хутшăннă хыççăн, кăтарса парать хаçат, итальянецсене çакăн çинчен астутарнă: вăйлă противника хирĕç пуçланă вăрçăра вăйлăн сĕнтеричен çитĕнӳсемпе ăнăçлăхсем те нумай пулаççĕ. Италин колониальнăй фрончĕ хыттăн вăйсăрланнă, унăн çыннисем тĕлĕшпе пулнă тата материалла сухатусем чылаях пысăк, вĕсем çинчен çар сводкисенче тата хаçатсенче те йышăннă. Анчах Италин пĕтĕм çар вăйĕсемпе ганлаштарсан, вăл сухатусем ытлашши пысăк мар. Англия Триполие туртса илсен те, тесе çырать хаçат, çак вăрçă мĕнле пĕтесси çинчен татăклăн калама çук. Киренаики Италишĕн пысăк вырăнта тăнине кăтартса парса, хаçат çапла çырать: «Çавăн пек вăйлăн сарăлса пыракан вăрçăра пысăк жертвăсем тумасăр çĕнтерме çук». Вăтаçĕр тинĕсĕнче Англи позицийĕсем, паллах, вăрçă пуçланнă вăхăтрипе танлаштарсан, улшăннă, мĕншĕн тесен Англин тинĕсри базисен хисепĕ Греци гаванĕсемпе утравĕсен тата Киренаикăри базăсен шучĕпе хутшăннă. Анчах, пысăк сухатусем пулнă пулсан та, Италия хăйĕн анлă фрончĕсенчи, пиншер километр таран сарăлса кайнă фронтсенчи, позицисене хăйĕн аллинчех тытса тăма пултарнă. Англи позицийĕсем çинчен хаçат çапла паллă тăвать: Вăтаçĕр тинĕсĕн хĕвелтухăçне хĕвеланăç пайĕсем пĕр-пĕринпе çав-çавах сыхăнса тăраймаççĕ. Германи авиацийĕ Суэц каналĕ таврашĕнчи вырăнсем çине час-часах пыра-пыра тапăнать, Вăтаçĕр тинĕсĕн хĕвелтухăç пайĕнчи положени Англишĕн лайăх теме çук.

«Германи хĕçпăшалĕ, — тесе çырать хаçат юлашкинчен, — пирĕн союзникăн аллинче мĕн кирлĕ таранах пур тата унпа вăл хăйĕн фрончĕсенче усă курать». Хаçат шухăшĕпе Итали задачи контрблокадăна хутшăннисĕр пуçне, «Вăтаçĕр тинĕсне пырса кĕмелли сулсене хупса лартассинче тата противникăн пысăк вăйĕсене тăлласа лартассинче пулса тăрать».

ССР Союзĕн Франципе торгпредствинчи 75 миллион франк средствăна каялла панă

КЛЕРМОН-ФЕРРАН, февралĕн 17-мĕш. (ТАСС). Офи (Гавас) агентстви çапла пĕлтерет: «Малопольска» нефть компани тăратнă иск тăрăх суд решени йышăннă, вăл решенире, укçа тата çаван пек хаклă япаласем çине истецăн никам сивлеме пултарайман прависем тăрăх çеç арест хума пултараççĕ, тенĕ. Анчах «Малопольска» нефть компанин пурлăхне совет войскисем Польша территорине йышăннă вăхăтра илнĕ пулнă. Суверенлăй государство ĕçĕ е комерчески е тата административлле ĕмĕтпе тунă государство ĕçĕсем çинчен сăмах пырать тесе халхи вăхăтра калама май çук. Ку ыйтăва хăçан та пулсан положенине пĕтĕм тĕнчери договорсемпе йĕркелеççĕ, çаван чухне çеç татса пама пулать, халхи вăхăтра истецăн çав прависен принципĕсене çеç палăртса пама пулать.

Малалла суд определенинче çапла каланă: истец халхи вăхăтра тăратнă ыйтусем закон хушнипе килĕшӳллĕ мар пирки, Совет Союзĕн Франципи суту-илӳ представительствин тĕрлĕ хаклă япалисене, мĕнпурĕ 75 миллион франк, каялла памалла тăвас. Вăл ареста совет войскисем Польша çине кĕрсе кайнă вăхăтра «Малопольска» нефть компанийĕ хума ыйтнă пулнă».

Англи флотне вăрçă пуçланнăранпа 17 уйăх хушшинче кӳнĕ çухатусем

Германири радио пĕлтернĕ тăрăх, хальхи вăрçă пуçланнăранпа 17 уйăх хушшинче, океан шывĕсем çинче, Германи çар карапĕсем кротивник суднисене тата вăл усă куракан суднăсене пумай путарнă. Путарнă суднăсен пĕтĕм тоннажĕ—670 пин регистровăй брутто-тонна. 1914—1918 çулсенчи вăрçăн 4 çулĕ хушшинче Германин тинĕс-çар вăйĕсем океансем çинче путарнă суднăсен пĕтĕм тоннажĕ 570.000 регистровăй брутто-тонна шутланнă. (ТАСС).

Чăваш АСС Республикинчи МТС-сем тракторсене мĕн чухлĕ юсанине кăтартакан СВОДКА

(1941 ç. февралĕн 15-мĕшне, процентпа)

МТС ячĕсем	Капиталлă ремонт	Текущий ремонт	Пĕтĕмпе
Улатăр	41,6	19,3	25,5
Элĕк	58,8	41,9	47,9
Вăрнар	61,1	64,8	63,6
Пĕпреç	61,5	70,8	67,5
Ишлей	52,3	51,5	51,8
Канаш	88,8	41,3	52,6
Куславкка	60,0	59,2	59,5
Комсомольский	20,0	30,4	27,2
Хĕрлĕ Чутай	—	100,0	100,0
Кувакино	70,0	54,3	93,3
Сĕнтĕрвăрри	50,0	45,0	46,1
Первомайский	—	66,6	50,0
Пăрачкав	42,8	55,5	51,5
Сĕнтĕр	42,8	50,0	47,0
Красноармейский	37,5	50,0	46,3
Вăрмар	20,8	44,4	35,0
Çĕрпӳ	77,7	40,0	51,7
Шупашкар	38,8	53,8	47,7
Чкаловский	28,5	48,2	40,0
Шăмăршă	100,0	100,0	100,0
Шăхасан	62,5	93,9	83,6
Сĕмĕрле	55,5	52,3	53,3
Етĕрне	27,2	39,1	35,2
Елчĕк	46,1	69,7	60,8
Тăвай	26,6	43,3	36,3
Республикипе	48,8	54,3	52,1

Пĕлтерни

1941 çулти февралĕн 23-мĕшĕнче МОПР Чăваш АССР организацийĕн обласри V-мĕш конференцийĕ пухăнать.

Делегатсен Шупашкар хулинче кăнтăрла 2 сехет тĕлне çитмелле. Делегатсене Канаш урамĕнчи 8-мĕш №-лĕ çуртра регистрацилеççĕ.

МОПР Чăваш Обкомĕ

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ

Редакци адресĕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати. **Телефонсем:** редакторăн—0—67, редактор заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн—0—88, çыру-семпе рабселькорсен пайĕн —2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» журналăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство заведующийĕн—5—38, конторăн—0—23.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии Чувашской АССР. Заказ № 146. Ф. Б. 58×84 п. л.

НТ 2669.